Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ИЮЛӖ 2 ШАМАТКУН 50 (4963) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ Пӗр №-рӗ 10 пус.

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—57, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

Чебоксары Ц. Б. им. Горького

Рабочисемпе работницӑсем, инженерлӑ-техникӑлӑ работниксем тата служӑшчисем! Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайома ҫырӑнса илер, виҫ ернери укҫине хамӑрӑн государствӑна кивҫен парар!

Колхозниксемпе колхозницӑсем! Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайома ҫырӑнса илсе, виҫӗ ернери дохода государствӑна кивҫен парар!

Зайом ҫырӑнса илесси— ...ни гражданинӑн чыслӑ ӗҫӗ

...йан епӗр ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх ...йомӗ (пӗрремӗш ҫул кӑларӑмӗ) ...чен йышӑннӑ саккуна пичетле... кӑларатпӑр. Ҫак хыпара Чӑваш ...ыннисем, ССР Союзӗнчи пӗтӗм ...ыннисем пекех пысӑк кӑмӑлпа ...ӗҫ. Вӗсем хӑйсен ик-виҫ ер...и ӗҫ укҫине социализмлӑ го...дарствӑна кивҫен пама васкӗҫ. ...ирӗн ҫӗршывра зайом ҫырӑнса ...сси кашни гражданинӑн хисеплӗ ...ӗҫӗ пулса тӑчӗ. Совет халӑхӗ ...низацилӗн зайом ҫырӑнса ил... татах та татах Ленин—Ста... партине, совет правительстви... социализмлӑ тӑван ҫӗршыва ...мсӗр чӗререн йуратнине, унӑн ...хаватне тӗреклетме тӑрӑшнине ...артать.

...ӑваш республикӗнчи ӗҫҫынни... иккӗмӗш пилӗкҫуллӑх зайомӑн ...ремӗш кӑларӑмне 8.565 пин ...кӗлӗх илнӗ пулсан, иккӗмӗш ...кҫуллӑх зайомӑн тӑваттӑмӗш ...арӑмне 12.286 пин тенкӗлӗх ...е. 1937 ҫулта ӗҫҫыннисен ы...ҫене пурнӑҫа кӗртсе прави...твӑ кӑларнӑ ССР Союзӗн обо...не тӗреклетмели зайома кӗске ...трах темиҫе ҫӗр мӗлйун ытла ...нса илнӗ. Совет Союзӗнче 50 ...йун ҫын зайом тытать.

...ет, тӗрекленет пирӗн социа...млӑ ҫӗршыв. Сталинла икӗ ...кҫуллӑх хушшинче совет халӑ... ...СК(б) Партипе аслӑ ҫулпуҫ ...ин йултӑш йертсе пынипе хӑ... ҫӗршывне чи вӑйлӑ, хӑватлӑ ...тра индустрилӗ, тӗнчери чи ...ӑ йалхуҫалӑхлӑ державӑ туса ... Експлоатаципе пусмӑрлӑх ...ине ӗмӗрлӗхех пӗтерӗ. Йалта ...хулара та социализм ҫӗнтер... Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар—тӗнчери чи ...лӑ ҫар. Пирӗн тинӗссем ҫинче ...лӑ Хӗрлӗ Флот тӑрать. Пирӗн ...атлӑ авиаци пур. Пирӗн ҫӗршыв, ...ман пирӗн ҫине вӑрҫӑпа килме ...лать пулсан, ӑна хӑйӗн ҫӗрӗ ...ех нимӗн хӑвармисӗр ҫӗмӗрсе тӑк... кирлӗ таран вӑйлӑ та хӑвӑрт ...кен самолотсем пама пулта... Партипе правительствӑ чӗнсе... социализмлӑ ҫӗршывӑн пур ...ссисенчен те пиншер, вунӑшар ...мӗлйуншар хурҫӑ ӑмӑрт-кайӑк... тапранса вӗҫсе тухӗҫ, тӑшмана ...рсе тӑкӗҫ.

...ӑван ҫӗршыва вӑрттӑн ҫапса ...ме шутланӑ тӑшмансене—троц...а-бухаринла, буржуалӑ-национ...исла шпионсене ҫӗмӗрсе тӑкни... Совет Союзӗ тата та ытларах ...екленчӗ.

...овет государствин хӑйӗн граж...ӗсене пуйан, культурӑлӑ, сава...лӑ, телейлӗ те илемлӗ пурнӑҫ... пурӑнма кирлисене пурне те ...а пачӗ. Совет гражданинӗ—ас...ҫа пуйан социализмлӑ хӑватлӑ ...шывӑн хуҫи. Ӑна Сталинла Кон...туци ӗҫлеме, канма, вӗренме, ...тӑлсӑр йе чирлесен государствӑ...ӗ пулӑшу илме права ҫирӗплетсе, ...семпе туллин усӑ курма пур май... ...е те туса пачӗ.

...ойузлӑ тата автономлӑ респуб...кӑсен Верховнӑй Совечӗсен суй...ӗнче коммунистсемпе партире тӑ...нисен Сталинла блокӗ ҫӗнтер... Совет халӑхӗ социализмлӑ ...ватлӑ промышлӗннӑҫӑн ҫӗнӗ ҫи...ӗвӗсӗмшӗн, колхоз уйхирӗнчи ...лӑ тырпулшӑн, хӑватлӑ та ҫӗн...ӳлӗ Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Флот...н, социализмлӑ наукӑпа культу...шӑн, коммунизмшӑн, Ленин—...алин партийӗшӗн, ӗҫҫыннисен ...пусӗ Сталин йултӑшшӑн сасӑла... хӑйӗн политикӑлла тата моральлӗ ...рлӗхне кӑтартрӗ. Ҫавӑнпа та Го...дарствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх ...йомне (пӗрремӗш ҫул кӑларӑмне) ...ларасси ҫинчен йышӑннӑ саккуна ...тӗм совет халӑхӗ пӗр кӑмӑлпа, ...ре тулли савӑнӑҫпа йышӑнӗ.

Сталинла виҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑх... пирӗн ҫӗршывӑн социализм ...роительствинче пысӑк ҫитӗнӳсем ...мала. 1938 ҫул ССРС государствӑ бюджечӗ иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан 20 мӗлйард тенке йахӑн ӳсмеле. Промышлӗннӑҫ, чукунҫулпа шыв транспарт, коммуналлӑ хуҫалӑх тата культурӑпа йӑла строительствине нумай укҫа хывнипе пӗрлех, йалхуҫалӑхне те нумай укҫа-тенкӗ хывма палӑртнӑ. 1938 ҫулта 500 ҫӗнӗ МТС организацилеме, трактӑрсен паркне 16 процент, комбайнсен шутне 26 процент ӳстерме, йалсенче, РСФС Республикӗнче кӑна, ҫӗнӗрен 1 500 шкул, темиҫе пин ача ҫурчӗсем, йаслӗсем, клубсем тума палӑртнӑ.

Паллах, халӑх хуҫалӑх планӗ тӑрӑх пахнӑ ӗҫсене пурнӑҫа кӗртме пирӗн государствӑна нумай укҫа-тенкӗ кирлӗ. Вӑл укҫана Совет государстви социализмлӑ промышлӗннӑҫ, транспарт, йалхуҫалӑх тата суту-илӳ дохочӗсенчен илет. Ҫавӑнпа пӗрлех, пирӗн государствӑ зайомсем кӑларса ӗҫҫыннисенчен те кивҫен илет.

Пирӗн зайомсем ӗҫҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатма, ҫӗршыв хуҫалӑхне тата культурине ӳстерме, унӑн хӑватлӑхне тӗреклетсе вӑйлатма пулӑшаҫҫӗ. Ӗҫҫыннисем ҫакна пӗлеҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем ҫӗнӗ зайома вырнаҫтарма хастарлӑн хутшӑнма хатӗр тӑраҫҫӗ.

Ҫӗнӗ зайома вырнаҫтарас ӗҫе ӑнӑҫлӑн организацилесси — парти, совет, профсойуз тата ытти обчӑлӑ организацисен умӗнче тӑракан политикӑлӑ пысӑк задач.

Зайом сарас ӗҫре РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗнче пухнӑ пуйан опытсемпе усӑ курмала, суйлав кампанинче ӗҫре палӑрнӑ агитатӑрсене, доверӗннӑйсене, вулавҫӑсене, суйлав комиҫҫисенче ӗҫленисене, активиссене, интеллигенцине тата ытти обчӑлӑ вӑйсене—ҫака пысӑк ответлӑ ӗҫе активлӑн хутшӑнтармала. Стена хаҫачӗсен, радио, вулав ҫурчӗсен, финанс секцисен, государствӑ кредитне тата перекет ӗҫне пулӑшакан комиҫҫисен, Ленин—Сталин парти ӗҫне чӗререн йуратакан ҫынсенчен уйӑрнӑ зайом уполномоченнӑйӗсен ӗҫӗсене вӑйлатмала, вӗсене партипе совет организацисен ӗҫре пулӑшмала.

Правительствӑ ҫӗнӗ зайом кӑларнине, вӑл зайом социализм строительствинче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине кашни гражданин пӗлсе тӑмала тӑвас пулать. Партипе совет организацисен хӑйсен пӗтӗм политикӑлла-массӑлла ӗҫне ҫак тӗп лозунг тӑрӑх туса пымала: кашни гражданин зайом ҫырӑнса илтӗр, кашни гражданин хӑйӗн ик-виҫ ернери ӗҫ укҫинчен кайа мар зайом илтӗр. Нимӗн иккӗленмели те ҫук, пысӑкрах ӗҫ укҫи илекен рабочисемпе служӑшчисенчен нумайӗшӗ, ҫавӑн пекех тата тупӑш ытларах илекен колхозниксем ҫӗнӗ зайома ик-виҫ ернери ӗҫ укҫинчен те ытларах ҫырӑнса илӗҫ. Вӗсем пӗр уйӑх ӗҫ укҫилӗх зайом ҫырӑнса илме тӑрӑшнине пур майсемпе те пуҫарса пымала, ырламала.

Ҫакӑнпа пӗрлех рабочисене, колхозниксене, служӑшчисене зайом ҫырӑнасси ирӗклӗ ӗҫ пулни ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса памала. Ку ӗҫре ирӗксӗрлени пулмала мар.

Зайома сарас ӗҫре халӑх тӑшманӗсем пур майсемпе те чӑрмантарма пӑхӗҫ. Вӗсен хирӗҫӗвне вӑхӑтра тӑрӑ шыв ҫине кӑларса аркатса тӑкмала, револьуцилӗ сыхӑлӑх вӑйлӑ пулмала.

Совет халӑхӗ хӑйӗн Ленин—Сталин партине, хӑйӗн правительствине вӗҫӗмсӗр йуратать. Уншӑн социализмлӑ ҫӗршывран хаклӑраххи нимӗн те ҫук. Ҫӗршыври телейлӗ те ирӗклӗ, савӑнӑҫлӑ, культурӑлӑ та пуйан пурнӑҫшӑн, ҫӗршывӑн чаплӑ малашлӑхӗшӗн, ӑна чечеклентерессишӗн—вӑл хӑйӗн пӗтӗм вӑйне парать. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайома ҫырӑнса илесси—кашни гражданинӑн чыслӑ ӗҫӗ пулса тӑрать.

Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайомне (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) кӑларасси ҫинчен

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ ПОСТАНОВЛЕНИ

Ӗҫҫыннисен ӳссе пыракан перекет укҫине виҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑх планӑн хуҫалӑхпа культурӑ строительстви задачӑсене пурнӑҫа кӗртес ӗҫе тата ҫӗршывӑн оборонине те тӗреклетес ӗҫе хутшӑнтарас шутпа, ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ӗҫҫыннисен йышӑннӑ сӗнӗвӗсемпе килӗшӳлӗ пулса йышӑнать:

1. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайомне (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) 5 мӗлйард тенкӗлӗх кӑларас.

2. Зайома 20 ҫуллӑх срука 1938 ҫулти декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 1958 ҫулти декабӗрӗн 1-мӗшне ҫити ҫулталӑкне тӑваттшар процент шутӗнчен кӑларас.

3. Зайом облигацисене тата вӗсен тупӑшӗсене,—ку хисепе выигрышсем те кӗреҫҫӗ,—государствӑ тата вырӑнти налуксемпе пуҫтарусем хурассинчен йӑлтах хӑтарас.

4. ССРС Финанс Халӑх Комиссариачӗ тӑратнӑ Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайомне (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) кӑлармали условисене ҫирӗплетес.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ В. МОЛОТОВ.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн ӗҫӗсене тӑвакансӗ Н. ПЕТРУНИЧЕВ.

Мускав, Кремль.
1938 ҫулхи ийулӗн 1-мӗшӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1938 ҫулхи ийулӗн 1-мӗшӗнче ҫирӗплетнӗ

Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайомне кӑлармали условисем

(ПӖРРЕМӖШ ҪУЛХИ КӐЛАРӐМ)

1. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайомӗ (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) икӗ кӑларӑмран: проигрышсӑр тата процентлӑ кӑларӑмран тӑрать.

Зайомӑн кашни кӑларӑмӗ разрйадсем ҫине пайланать, кашни разрйадра 100 шер мӗлйун тенкӗлӗх пулать.

Кашни разрйад 20 пин ҫеририен тӑрать. Проигрышсӑр кӑларӑмӑн кашни разрйачӗн ҫерийӗсен номӗрӗсем 40.001 № тен пуҫласа 60 пин № таран пулаҫҫӗ, процентлӑ кӑларӑмӑн номӗрӗсем 120 001 № тен пуҫласа 140.000 № таран пулаҫҫӗ.

Кашни ҫери ҫӗр тенкӗлӗх 50 облигациран тӑрать.

Кашни ҫеринчи облигацисен номӗрӗсем 1 номӗртен пуҫланса 50 № таран пулаҫҫӗ.

2. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Зайомӗ (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) 100 тенкӗлӗх облигацисемпе тухать.

100 тенкӗлӗх облигацисемсӗр пуҫне, ҫавӑн пекех тата проигрышсӑр кӑларӑмра 500, 200, 50, 25 тата 10 тенкӗлӗх облигацисем, зайомӑн процентлӑ кӑларӑмӗнче—500, 200 тата 25 тенкӗлӗх облигацисем пулаҫҫӗ.

500 тата 200 тенкӗлӗх облигацисем пӗр ҫерири 5 йе 2 ҫӗр тенкӗлӗх облигацисене пайланса, 5 йе 2 номӗрлӗ пулаҫҫӗ, ҫапла вара вӗсем: а) проигрышсӑр кӑларӑмра — пӗр вӑхӑтрах облигаци ҫинче кӑтартнӑ номӗрсенчен кашни тухакан 5 йе 2 выигрыш илме; б) процентлӑ кӑларӑмра—облигацин пӗтӗм кӑтартнӑ хакӗнчен процентпа шутласа тупӑш илме тивӗҫлӗх параҫҫӗ.

50, 25 тата 10 тенкӗлӗх облигацисем 100 тенкӗлӗх облигацисен пайӗсем пулаҫҫӗ те ҫӗр тенкӗлӗх облигаципе илмели выигрышран йе процентлӑ тупӑшран тивӗҫлӗ тӳпине (ҫуррине, чӗрӗкне, пӗрре вуннӑмӗш пайне) илме тивӗҫлӗх параҫҫӗ.

Асӑрхаттарни: 25 тата 10 тенкӗлӗх облигацисене зайом илме ҫырӑннӑ хисеп тӑрӑх шутласан пысӑкрах хаклӑ облигацисем пама май ҫук чухне подписчиксемпе расчот тума ҫеҫ кӑлараҫҫӗ.

3. Проигрышсӑр кӑларӑм облигацийӗсем тӑрӑх тупӑша выигрышсемпе тӳлеҫҫӗ.

100 тенкӗлӗх облигаци ҫине, облигаци кӑтартнӑ хакӗпе (100 тенкӗ) пӗрле выигрышсем 3.000, 1.000, 500, 200 тенкӗ тата 150 тенкӗ тухмала пулать.

Зайомӑн 20 ҫуллӑх срукра проигрышсӑр кӑларӑмӑн кашни облигацийӗ выльаса илет.

Выигрыш тухнӑ облигацине саплаҫҫӗ те малалахи тиражсӗнчен кӑлараҫҫӗ.

4. Проигрышсӑр кӑларӑм тӑрӑх зайомӑн 20 ҫуллӑх срукӗ хушшинче выльав тиражӗсем 80—ҫулсерен тӑваттшар пулаҫҫӗ.

Выльав тиражӗсем ССР Союзӗн Финанс Халӑх Комиссариачӗ палӑртса йышӑннӑ сруксенче пулса иртеҫҫӗ.

5. Кашни выльав тиражӗнче проигрышсӑр кашни разрйад ҫине, йе, урӑхла каласан, зайомӑн ҫак кӑларӑмӗнчи кашни 100 мӗлйун тенки ҫине ҫакӑн чухлӗ выигрышсем тухаҫҫӗ:

Ҫулсем	Миҫемӗш тиражсенче	3.000 тенкӗлӗ выигрышсен хисепӗ	1.000 тенкӗлӗ выигрышсен хисепӗ	500 тенкӗлӗ выигрышсен хисепӗ	200 тенкӗлӗ выигрышсен хисепӗ	150 тенкӗлӗ выигрышсен хисепӗ	Кашни тиражри пӗтӗм выигрышсен хисепӗ	Кашни тиражри пӗтӗм выигрышсен пӗтӗм сумми (тенкӗпе)
1	2	3	4	5	6	7	8	9
1-мӗш ҫул	1—4-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	50	1.000	8.944	10.000	1.574.600
2-мӗш ҫул	5—8-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	50	1.000	8.944	10.000	1.574.600
3-мӗш ҫул	9—12-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	50	1.300	7.144	8.500	1.364.600
4-мӗш ҫул	13—16-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	50	1.300	7.144	8.500	1.364.600
5-мӗш ҫул	17—20-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	50	1.300	7.144	8.500	1.364.600
6-мӗш ҫул	21—24-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
7-мӗш ҫул	25—28-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
8-мӗш ҫул	29—32-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
9-мӗш ҫул	33—36-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
10-мӗш ҫул	37—40-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
11-мӗш ҫул	41—44-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
12-мӗш ҫул	45—48-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
13-мӗш ҫул	49—52-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
14-мӗш ҫул	53—56-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
15-мӗш ҫул	57—60-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	100	1.900	5.494	7.500	1.262.100
16-мӗш ҫул	61—64-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	150	2.600	13.844	16.600	2.679.600
17-мӗш ҫул	65—68-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	150	2.600	15.344	18.100	2.904.600
18-мӗш ҫул	69—72-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	150	2.600	22.344	25.100	3.954.600
19-мӗш ҫул	73—76-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	150	2.600	28.794	31.550	4.922.100
20-мӗш ҫул	77—80-мӗш тиражсенче кашнинчех выльавра пулаҫҫӗ	1	5	150	2.600	35.394	38.150	5.912.100
	Пӗтӗмпе 80 тиражра зайомӑн кашни 100 мӗлйун тенки ҫине выльавра пулаҫҫӗ.	80	400	8.000	151.600	839.920	1.000.000	160.948.000

6. Выльав тухнӑ облигацисем тӑрӑх выльаса илнӗ укҫана 1959 ҫулти декабӗрӗн 1-мӗшчен илме пултараҫҫӗ.

Ҫав срук иртсе кайсан выигрышне те, облигаци хакне те тӳлемеҫҫӗ.

7. Зайомӑн процентлӑ кӑларӑм облигацийӗсем тӑрӑх тухакан тупӑша купонсем тӑрӑх ҫулталӑкра пӗр хут 4 процентшар тӳлесе тӑраҫҫӗ. Купонсемшӗн тӳлемели срuksem 1939 ҫулти декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса, кашни ҫулах декабӗрӗн 1-мӗшӗнче пулса пыраҫҫӗ.

8. Процентлӑ кӑларӑм облигацийӗсен укҫине кайала тавӑрса пама 1954 ҫулхи декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнаҫҫӗ, вара пиллӗк ҫул хушшинче (1954, 1955, 1956, 1957 тата 1958 ҫулсенче) кашни ҫулах пӗр тан пайсемпе кайала тавӑрса параҫҫӗ.

1954—1957 ҫулсенче укҫине тавӑрса памали облигацисене—ҫулсерен пулакан погашени тиражӗсем тӑрӑх палӑртаҫҫӗ. Погашени тиражӗсене иртермели срuksene ССР Союзӗн Финанс Халӑх Комиссариачӗ палӑртса парать.

Облигаци тытакансене облигаци укҫине тавӑрса панӑ чухне, тираж пулнӑ ҫулти декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа, облигаци ҫинче кӑтартнӑ хакне тӳлеҫҫӗ. Погашени тиражне тухман облигацисен укҫине 1958 ҫулти декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа кайала тавӑрса параҫҫӗ.

9. Погашени тиражне тухнӑ облигацисем тӑрӑх купонсене тӳлесе илеҫҫӗ. Ку хисепе тираж пулса иртекен ҫулти декабӗрӗн пӗрремӗш срукла купонӗ те кӗрет. Малали срuksenчи купонсене тӳлесе илмеҫҫӗ.

10. Процентлӑ кӑларӑмӑн кайала тӳлесе илме тивӗҫлӗ облигацийӗсемшӗн, ҫавӑн пекех тата тӳлемели срукӗ тухнӑ купонсемшӗн те, укҫисене 1959 ҫулхи декабӗрӗн 1-мӗшчен илес пулать. Ҫак срук иртсе кайсан облигацисемпе купонсем хӑйсен хакне ҫухатаҫҫӗ, вӗсемшӗн укҫа тӳлемеҫҫӗ.

ССР Союзӗн Финанс Халӑх Комиссарӗ А. ЗВЕРЕВ.

ПРОЕКТ

ЧĂВАШ ОРФОГРАФИН ТĔП ПРАВИЛИСЕМ

I. Фонетикă правилисем

1. Чăваш çырăвĕнче 39 саспалли: Аа, Ăă, Бб, Вв, Гг, Дд, Ее, Ёё, Жж, Зз, Ии, Йй, Кк, Лл, Љљ, Мм, Нн, Њњ, Оо, Пп, Рр, Сс, Çç, Тт, Ťť, Уу, Ÿÿ, Фф, Хх, Цц, Чч, Шш, Щщ, Ъ, Ыы, Ь, Ээ, Юю, Яя.

2. Чăваш чĕлхинчи сасăсем çакăн пек ушкăнсем çине уйăрăлаççĕ.

1) Уçă сасăсем: а, ă, е, ĕ, и, о, у, ÿ, ы, э, ю, я.

2) Хупă сасăсем: б, в, г, д, ж, з, й, к, л, љ, м, н, њ, п, р, с, ç, т, ť, ф, х, ц, ч, ш, щ.

Уçă сасăсем çакăн пек пайланса тăраççĕ:

1) хытă уçă сасăсем: а, ă, у, ы, о, э, (я, ю,),

2) çемçе уçă сасăсем: е, ĕ, ÿ, и.

АСĂРХАМАЛЛИ: о, э, я, ю саспаллисене урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче кăна çыраççĕ.

Хупă сасăсем çакăн пек пайланса тăраççĕ:

1) йанăракан хупă сасăсем: б, г, д, ж, з;

2) йалан йанăракан хупă сасăсем: в, й, л, љ, м, н, њ, р;

3) йанăраман хупă сасăсем: п, к, с, ç, т, ť, ф, х, ш, тата йанăраман хупă аффикатсем: ч, ц, щ.

1-мĕш АСĂРХАМАЛЛИ: б, г, д, ж, з йанăракан хупă сасăсене тата ф, ц, щ хупă сасăсене урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче кăна çыраççĕ.

2-мĕш АСĂРХАМАЛЛИ: йанăраман хупă сасăсем—п, к, с, ç, т, ť, ч, х, ш йанăранас тĕлĕшпе мăшăрланаççĕ. (4 § пăх).

3. Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕннине çырура икĕ саспаллипе кăтартаççĕ: атте, анне, алли, каннă.

4. П, к, х, т, ç, ш, т, ť йанăраман хупă сасăсем сăмах варринче икĕ уçă сасă хушшинче йе йалан йанăракан хупă сасăпа (й, в, р, л, љ, м, н, њ) уçă сасă хушшинче тăраççĕ пулсан, йанăраса та, йанăрамасăр та илтĕнме пултараççĕ. Йанăраса илтĕнне чухне пĕр йанăраман хупă сасă çыраççĕ: ата, саçă, пуху, икĕ (йапала), лаша т. ыт. те, йанăрамасăр илтĕнне чухне икĕ йанăраман хупă сасă çыраççĕ: атта, сасса, пуххи, иккĕ, мачча.

5. љ, њ, ť саспаллисене хыттăн илтĕнекен сăмахсенче, тата хутăш сăмахсен хыттăн илтĕнекен сыпăкĕсенче çыраççĕ (кунта сасăсене çемçетекен паллă сăмаха тĕрĕс вулама пулăшат): выља (вы-ља), хаљхи (хаљ-хи), ахаљтен (ахаљ-тен), Иљуш, мăкăњ, мăкăњсем (анчах: мăкăне, мăканĕн), супăњ, Вањук, ťыха, Енťук (Енťук), калаť (анчах: калатех 6 § пăх).

Çакăн пек чухне л, н, т сасăсем, тĕрлĕрен фонетикăла условисене пула, çемçен илтĕнеççĕ пулсан, вĕсене çемçетмели паллăсăрах (л, н, т) çыраççĕ:

а) çемçен илтĕнекен сăмахсемпе сыпăксенче: кĕнеке, вĕренекен, тилĕ, килет, пукане (пу-ка-не), тракторсенĕн (трак-тор-се-нĕн), тăватех (тă-ва-тех),

б) хыттăн илтĕнекен сăмахсенче çемçе хупă ç, ť, ч сасăсем умĕн: çулçă, Алťук, Панťак, анчах, шанчăк, калча, калатчĕ, калатчĕç;

в) л, н, т сасăпа пĕтекен хыттăн илтĕнекен сăмах тĕпĕсенче, вĕсен вĕçĕсенче çемçе аффикс пулсан: кул-кулчĕ, кан-канчĕ, пул-пулмĕ.

АСĂРХАМАЛЛИ: 3-мĕш сăпат аффиксне сухатнă хутăш сăмахсенче те, çавăн пекех љ, њ, ť саспаллисене çырмаççĕ: патне, ывăлне, кăмăлне, санăнне, кĕркуңне, суркунне; тата çакăн йышши сăмахсенче: атте, анне, хваттер.

6. И сасăпа пĕтекен хытă сăмахсем икĕ тĕрлĕ пулма пултараççĕ: а) сăмах вĕçĕнчи и 3-мĕш сăпат аффиксĕ пулат, ун умĕнче тăракан хупă сасăсем, çав шутрах л, н, т сасăсем те çемçелмеççĕ: алли, ури, вăрманти, аванни; б) сăмах и сасăпа пĕтет, вара и умĕнчи хупă сасă çемçе илтĕнет: валљи, Матťи (сын йачĕ), ањњи.

Валљи, ањњи, Матťи йышши сăмахсенче и умĕн љ, њ, ť çыраççĕ.

7. Хытă сăмахсенче ç, ť, ч çемçе хупă сасăсем хыççăн ы çыраççĕ (и мар): çыннăн, çыртăм, çырла, çырăм, ťăхăр, чышкă, чылай.

8. С саса ш йе ç сасăпа йунашар тăрсан, ш йе ç сасă пек илтĕнет: йулташшем, йăвăççем, йулташшăр, йăвăççăр, тăрăшша, калаççа, калашшăн, килешшĕн; анчах вăл сăмахсене вĕсен пулăвне пăхса çыраççĕ: йулташсем, йăвăçсем, йулташсăр, йăвăçсăр, тăрăшса, каласса, каласшăн, килесшĕн.

II. Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене çырасси

9. Вырăс чĕлхинчен йе вырăс чĕлхи урлă урăх чĕлхерен кĕнĕ интернационаллă сăмахсен тĕпне вырăс графикипех нимĕн улăштармасăр çыраççĕ; сăмаха вĕçлес йĕркепе йе çĕнĕ сăмах тăвас йĕркепе улăштарнă чухне чăваш морфологин саккувĕсем тăрăх улăштараççĕ: трактор, директор, рынок, вожатый, Гоголь, Тула, опыт, техникум, пролетарий, комитет, комиссариат, масса, элемент, поэт, юбилей, экономика, национальность, отряд, Вологда, фельетон, Вася, князь, бюджет, бюро, жюри, площадь, словарь, власть, комсомолец, субъект, Горький, Харьков, Ильич, октябрь, ноябрь, Щедрин, Дарвин, зоология, перпендикуляр, индукция, комбайн, обезличка, обязательство, театр, класс, металл, система, силос, колхоз, вагон, чугун.

Асăрхамалли: Чăваш чĕлхине урăх чĕлхерен тахçанах кĕрсе улшăннă сăмахсене йанăраман хупă саспаллисемпе çыраççĕ: пасар, сат, сут.

10. Урăх чĕлхерен кĕнĕ ия, ие, ий вĕçлĕ сăмахсене йат падежĕнче çаплипех çыраççĕ: Италия, аналогия, академия, юстиция, постановление, пролетарий, Горький; ытти падежсенче я, е, й сасăсем тухса ÿкеççĕ: академин, академийе, академипе, академире, академирен, академисем т. ыт. те.

1-мĕш асăрхамалли. Пару-тăву падежĕсенче тухса ÿкнĕ я, е сасăсем вырăнне й кĕрсе ларат.

2-мĕш асăрхамалли. Ия вĕçлĕ урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем, вĕсен ударенийĕ и çине ÿкет пулсан (Россия), тата а, я сасăсемпе пĕтекен сăмахсем, вĕçленĕ чухне йе çĕнĕ сăмахсем тунă чухне, çаплипех йулаççĕ: идея, идеян, идеяна, идеяпа, идеяран, идеясем, идеялă, арена, аренан, аренана, аренапа, аренара т. ыт. те.

11. Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче çемçетекен паллă (ь) сăмах варринче те, вĕçĕнче те, пур хупă сасăсем умĕнче те çаплипех йулат. Çемçетекен паллăпа пĕтекен сăмаха вĕçленĕ чухне, ытти падежсенче вăл палла çырмаççĕ, ун вырăнне çемçе аффикссем хушаççĕ: октябрь, октябрĕн, октябрпе, октябрте, октябрсем, власть, властĕн, власте, властлĕ.

12. Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенчи суффикссене çырасси:

а) Вырăс сăмахĕсенче ец ок суффикссене пур формăра та çаплипех çыраççĕ: комсомолец, партиец, красноармеец, участок, список; комсомолецăн, комсомолеца, комсомолецпа, комсомолецла, участок, участокăн, участока, участоклă.

Изм, ист, ст, ств, иат, ин суффикссене улăштармасăр çыраççĕ: марксизм, социализм, дарвинизм, коммунист, телеграфист, специалист, дантист, власть, область, государство, пролетариат, газолин, промышленность.

III. Сăмах пуçламăшĕнче хăçан пысăк йе пĕчĕк саспаллипе çырасси

13. Сăмах пуçламăшĕнче пысăк саспаллипе пуçласа çырмали йеркесем çаксем:

а) Точкă хыççăн предложени пуçламăшĕнче, тата ыйтупа кăшкăру паллипе пĕтекен предложенисем хыççăн.

б) Пайăр йатсенче, ашшĕ йачĕне хушамачĕсенче: Александр Сергеевич Пушкин, хуласемпе йалсен йачĕсенче: Мускав, Шупашкар; шывсен, çырмасен, кÿлĕсен, тусен, тĕрлĕ сăртсен, тип çырмасен йачĕсенче: Атăл, Елкÿл, Шурă тинĕс, Çавал, Таранвар; çăлтăрсен йачĕсенче: Ала çăлтăр; параход, карап йачĕсенче: Аврора, Мурманец; хапрăк-савăтсен йачĕсене: Единство, Дубитель, Большевик; кĕнеке, журнал, хаçат йачĕсенче: Чăваш Коммунĕ, Сунтал, Хатĕр пул, Химия, Капкăн т. ыт. те.

в) Учрежденисемпе организацисен кĕскетнĕ йачĕсене чăвашла куçармасăр пысăк саспаллипе çыраççĕ: Совнарком, СНК, Наркомпрос, НКП, СССР, ВКП(б).

г) Икĕ точкă хыççăн—урăх çын сăмахсен пуçламăшĕнче: Иван мана: „Пайан пуху пулат“,—терĕ.

14. Пĕчĕк саспаллипе çыранакан сăмахсем:

а) Должнăç йачĕсем: комиссар, секретар, бухгалтер.

б) Халăх, ăру, уйăх, кун, ерне йачĕсем: вырăс, январь, тунтикун, ернекун.

в) Пайăр йат мар сăмахсем.

IV. Сăмахсенче пĕр йе икĕ саспалли çырмали правилăсем

15. Çак формăсенче пĕр хупă саспалли çыраççĕ:

а) Глаголсен хаљхи вăхăтăн нумайлă хисепри 2-мĕш сăпатĕнче „калатăр, тăватăр, çÿретĕр“ çыраççĕ (калаттăр, тăваттăр, çÿреттĕр мар), мĕншĕн тесен ку форма хаљхи умĕнчи вăхăт формипе пĕре килет).

б) Уçă сасăпа пĕтекен йапала йачĕсенчен лă, лĕ аффикслă паллă йачĕсенче: лашалă, çăкалă, шĕлепкелĕ, кĕнекелĕ. Сăмах тĕпĕ л сасăпа пĕтет пулсан, икĕ л çыраççĕ: сухаллă, пыллă, кăмăллă.

в) Лăх, лĕх аффикслă сăмахсенче: хăмалăх, кĕпелĕх, çÿремелĕх, курмалăх, ернелĕх, пĕр тенкĕлĕх. Сăмах тĕпĕ л сасăпа пĕтет пулсан, икĕ л çырмала: пыллăх, кăмăллăх.

АСĂРХАМАЛЛИ: Хăш калаçура пĕр пек сăмахрах хупă сасса вăрăмлатаççĕ, хăшĕнче çук: тутăр—туттăр, çакăр—çаккăр, кукăљ—куккăљ, çулла; çыраççĕ: тутăр, çăкăр, кукăљ, кукăр, çула.

16. Çак формăсенче сăмах тĕпĕ хупă сасăпа пĕтет пулсан, пĕр хупă сасă, сăмах тĕпĕ уçă сасăпа йе йалан йанăракан хупă сасăпа пĕтет пулсан, икĕ пĕр пек хупă сасă:

а) Глаголсен хушу формин нумайлă хисепри 3-мĕш сăпатĕнче чăр (чĕр) аффиксне: хупă сасăсем хыççăн чăр (чĕр), уçă сасăпа йалан йанăракан хупă сасă хыççăн ччăр (ччĕр) хушăнат: чупчăр, çакчăр, çитчĕр, килччĕр, кайччăр.

б) Çителĕксĕр чĕ глаголсе: сукчĕ, вăл калатчĕ, лайăхчĕ, калаччĕ (есе), аванччĕ, кайччĕ, пурччĕ.

Ку глагола сăмахсемпе пĕрле çыраççĕ.

в) чен аффикса: касчен, августчен, праçникчен, ирччен, ыранччен.

17. Çак формăсенче икĕ пĕр пек хупă саспалли çыраççĕ:

а) Глагол тĕпĕ т сасăпа пĕтет пулсан, ун çумне тар (тер) аффикс хушăнсан: вырт-тар, ирттер. Глагол тĕпĕ уçă сасăпа йе р сасăпа пĕтет пулсан, ттар (ттер) аффикс хушăнат: çÿре-ттер, тултар-ттар, вула-ттар, çĕле-ттер.

б) Йапала йачĕсем ă, ĕ сасăпа пĕтеççĕ пулсан, çав ă, ĕ умĕн пĕр хупă сасă тăрат пулсан, вăл хупă сасă камăнлăхпа пару—тăву падежĕсенче вăрăмланат: ата—аттăн—атта, ала—аллăн—алла, тилĕ—тиллĕн—тилле. Камăннине пĕлтерекен аффикссем хушăнсан çаплах çыраççĕ: аллăм, аллу, алли; аттăм, атту, атти; тиллĕм, тиллÿ, тилли.

в) Камăннине пĕлтерекен и аффикс хупă сасăпа йе а, ĕ сасăсемпе пĕтекен паллă йачĕсем çумне хушăнсан: вăрăм-вăрăмми, аван-аванни, çирĕп çирĕппи, шурă-шурри, сара-сарри.

18. Паллă йачĕсенчен ăн, ĕн аффикс хушăннипе пулнă наречисен формисенче икĕ саспалли çыраççĕ: вăрăммăн, лайăххăн, хăйаррăн, сиввĕн (çак формăсене камăнлăх падежĕпе лайăхăн, хăйарăн) пăтраштарасран.

19. Пулмали причастисен мала (мали), меле (мели) аффиксĕсенче пĕр л çыраççĕ: каймала—килмеле, каймали—килмели.

20. Ла, ле аффикс хушăнса пулнă наречисемпе паллă йачĕсене икĕ л çыраççĕ: вăрманалла, çÿлелле, аналла, лапталла.

21. 1-рен пуçласа 10 çитиччен хисеп йачĕсем хыççăн тĕлĕн тăраççĕ пулсан, вĕсен варринчи хупă сасси вăрăмланат: пĕрре, иккĕ, виççĕ ... саккăр, тăххăр, вунтăххăр, çитмĕл тăххăр; йапала йачĕпе йе тепĕр хисеп йачĕ умĕн хурса калаççĕ пулсан, вăрăмланмаст: пĕр кун, икĕ кун, вунтăхăр кун, тăхăр тенкĕ.

V. Хутлă сăмахсене тĕрĕс çырасси

22. Управлени йе примыкани йĕркипе сыхăнса тăракан хутлă сăмахсене пĕрле çыраççĕ. Ун йышши сăмахсем, пĕрлешнĕ чирки, фонетика йенĕпе те час-часах улшăнкалаççĕ. Ку йышши сăмахсем çакăн пек пулма пултараççĕ:

а) 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă йапала йачĕсем хăй умĕнчи йапала йачĕпе: çăрасси (çăра уççи), улмуççи (улма йăвăççи), чĕрçитти (чĕр çи витти), анкарти (авăн карти).

б) Хăйĕн умĕнчи сăмахпа пĕрлешнĕ 3-мĕш сăпат аффиксĕсĕр йапала йачĕсем: арçын, кинеми, тĕпсакай, турахуп, кĕрçип, пÿртум.

в) Хăйĕн умĕнчи паллă йачĕпе, тата ытти сăмах ушкăнĕсемпе пĕрлешсе тăракан йапала йачĕсем: асатте, асанне, кăçал, кайура, кĕçĕр, пĕркун, пĕрмай, шуркут.

АСĂРХАМАЛЛИ: Çÿлерех кăтартнă майпа литературă чĕлхинче пулакан наукă терминĕсем, тата ытти çĕнĕ сăмахсем хутлă сăмаха фонетика йенĕпе улшăнмасăрах кĕрсен те, вĕсене пĕрлех çыраççĕ: хыççăмах, тымарçимĕç, виçкĕтеслĕх.

г) Тăву падежĕнче тăракан йапала йачĕпе „ту“ глагол пĕрлешсе пулнă хутлă глаголсем: чупту, асту, сутту, пуççап, астив.

д) Йапала йачĕпе кĕскетнĕ причасти пĕрлешсе пулнă сăмахсем: çулçÿрен, шăлйĕрен.

е) 11—19, 80—90 хутлă хисеп йачĕсене, тата тулли çĕрсем (200—900): вунпĕр, вунтăваттă, вунтăххăр, сакăрвуннă, тăхăрвуннă, икçĕр, виççĕр, пилĕкçĕр, тăхăрçĕр.

Ытти хутлă хисеп йачĕсене уйрăм çыраççĕ: çирĕм тăваттă, пин те тăхăрçĕр сакăрвун çиччĕ.

23. Хутлă сăмахлă хула йачĕсенче пĕр пайăр сăмахĕ уйрăммăн илтĕнсен, вăл сăмаха (вăл хăй пĕр-икĕ сăмахран пулнă пулсан та) çав пайăр йатăн ытти сăмахĕсенчен уйрăм) çыраççĕ, ытти сăмахĕсем ун умĕнче мĕнлине кăтартакан сăмахсем пулса тăраççĕ. Хутлă пайăр йата кĕрекен уйрăм сăмахсем хушшине дефис лартмала мар: Аслă Патăрйел, Кĕçĕн Йелчĕк, Аслă Арапуç, Пăлаçи Таран, Кÿлхĕрри Хапăс, Пăлапуç Нурăс; анчах çак малали пайăр йатсене çапла çыраççĕ: Вăрманкас, Вăрманкасси, Уйкас, Хурăнкас, Хурăнвар, Типçырма, Ватапуç, Хупкĕпер.

24. Мăшăр сăмахсен пĭрвайхи сăмахĕ пĕр сыпăклă, иккĕмĕшĕ пĕр йе икĕ сыпăклă сăмах пулсан, вĕсем пĕр ăнланăва пĕлтереççĕ пулсан, ун пек сăмахсене пĕрле çыраççĕ: тăнпуç, ăстăн, питкуç, кунçул, тырпул, çĕршыв, тумтир, шăмшак, килçурт, хĕрарăм, пирăвăр, ăсхакăл, хăшпĕр, хĕрача.

Дефиспа уйăрса çырмали мăшăр сăмахсем:

а) Пĕр йышши мăшăр сăмахсем: тăла-çăпата, хаçат-журнал, тырă-пулă, çăкăр-тăвар.

б) Пĕр йапалана пĕлтерекен мăшăр сăмахсенчен пĕри йе урăх чĕлхерен кĕнĕ, йе авалхи чăваш сăмахĕ, йе вырăнта калакан сăмах пулма пултарат: сават-сапа, йĕпе-сапа, выљăх-чĕрлĕх.

в) Мăшăр сăмахсенчен иккĕмĕшĕ сăмах çавранăçĕ майĕпе çех хушса хуни: инкек-синкек, укçа-пухча, кукăр-макăр, ача-пăча.

г) Тĕрлĕ майпа пулнă мăшăрланнă сăмахсем: пуçлă-вĕçлĕ, хĕлĕн-çăвĕн, айăн-çийĕн.

д) Мăшăрласа çырнă хисеп йачĕсем: иккĕ-виççĕ, ултта-çиччĕ, вăтăр-хĕрĕх, вунă-вунпилĕк (çын).

25. Пĕр сăмахах йунашар икĕ хут калаççĕ пулсан, вĕсен хушшине дефис лартаççĕ: ушкăнăн-ушкăнăн, хăш-хăш, пĕр-пĕр, кам-кам, мĕн-мĕн, час-час, турта-турта. Тата çакăн пек сăмахсене те дефиспа çыраççĕ: турти-туртми, пиçнĕ-пиçмен.

26. Вăйлă формăра тăракан паллă йачĕсене тата вăйлă йатне икĕлетсе калаканнисене дефис урлă çыраççĕ: çап-çута, тип-тикĕс, сап-сарă, шап шурă, хуп-хура, сара-сарă, çута-çута.

27. Междометисене тĕрĕс çырас тĕлĕшпе çакна асăрхамалла;

а) Мăшăрлă междометисене, йевĕрлев сăмахсене дефис урлă çыраççĕ: шăтăр-шăтăр, шăтăр-шатăр, чăш-чаш.

б) Междометисене, йевĕрлев сăмахсене, чарăнса тăрса уйрăмах вăйлăн кăтартса каласан, вĕсен кашнин хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ: кĕрĕс! шарт!

28. Татăксене тĕрĕс çырасси:

а) Ах, ех татăксене вĕсен çумĕнчи сăмахсемпе пĕрлех çыраççĕ: аванах, патнех, килтех.

б) Çак татăксене дефис урлă çыраççĕ:

ха, кил ха, кай-ха, çук-ха, ата-ха, тух-ха.

çке: аван-çке, çапла-çке, йураť-çке.

ши: кайнă-ши, çын-ши, çынсем-ши, çынсене-ши.

и: пур-и, кайаť-и, килет-и, кайнă-и, килнĕ-и.

мĕн: кайнă-мĕн, илес-мĕн.

в) Хутлă татăксене ахаљ татăксем пекех çыраççĕ: кайнă-ши-ха, каларăн-им, каларăн-и-мĕн, килтĕн-им, килтĕн-и-мĕн, каланă-им, каланă и-мĕн.

в) Ха, и, ши, çке, татăксене та, те союзсем хыççăн дефис урлă çыраççĕ: вăл та-ха, вăл та-и, вăл та-ши, епĕ те-çке.

г) Çемĕн (çем) татăка пĕрле çыраççĕ: кайнăçемĕн, кайнăçем, çырнăçемĕн.

д) Пек, мар, чух татăксене уйрăм çыраççĕ: лаша пек, ун пек, лайăх пек, ун пекки, ун чух, апла мар, кун пек мар.

Ытти татăксене пурне те уйрăм çыраççĕ.

VI. Хăшпĕр сăмахсене çырасси

29. И сасăпа пĕтекен йатсем камăнлăх падежĕнче йĕн (кĕскен н) аффикслă пулаççĕ, пару—тăву падежĕнче йе аффикслă пулаççĕ: пăри-пăрийĕн—пăрин—пăрийе, парти-партийĕн—партин—партийе.

АСĂРХАМАЛЛИ: Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче камăнлăх падежĕнче кĕскетнĕ аффикспа (н) çех уса кураççĕ: Испани—Испанин, агитаци—агитацин.

30. А, е сасăсемпе пĕтекен йатсем камăнлăх падежĕнче тулли аффикспа та (нăн), кĕскетнĕ аффикспа та (н) çыранаççĕ: лаша лашанăн (лашан), ĕне—ĕненĕн (ĕнен).

АСĂРХМАЛЛИ: Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче камăнлăх падежĕнче кĕскетнĕ аффикспа (н) çеç çыраççĕ: сцена—сценан, Россия—Россиян, тире-тирен, идея-идеян.

31. У, Ÿ сасăпа пĕтекен йатсем камăнлăхпа пару-тăву падежĕсенче ăвăн-ăва, ĕвĕн-ĕве аффикслă пулаççĕ: çыру-çыравăн-çырава, кĕрÿ-кĕревĕн-кĕреве.

32. Хупă сасăпа пĕтекен йатсем йат падежĕнче ĕ аффикс йышăнаççĕ: сурăх-сурăхĕ, трактор-тракторĕ, бандероль-бандероле, комсомолец-комсомолецĕ, склад-склачĕ, вожатый-вожатыйĕ; а, е сасăпа пĕтекен йатсем и аффикс йышăнаççĕ: лаша-лаши, ĕне-ени, арена-арени, карта-карти; и-пе пĕтекеннисем—йĕ хушаççĕ: шашни-шашнийĕ, жюри-жюрийĕ, тари-тарийĕ; ия, ея, ие, ий вĕçсемпе пĕтекен йатсен вĕçĕнче тăракан я, е, тухса ÿкет, вĕсен вырăнне йĕ аффикс хушăнат: агитация-агитацийĕ, партия-партийĕ, идея-идейĕ, постановление—постановленийĕ; У, ÿ сасăсемпе пĕтекен йатсем (кунта У, ÿ—ăв, ĕв-пе ылмашат) ĕ аффикс хушнат: çыру-çыравĕ, кĕтÿ-кĕтĕвĕ; а, ĕ—сасăсемпе пĕтекен йатсем и аффикс йышăнаççĕ: ата-атти, пулă-пулли, тилĕ-тилли.

33. Лашашăн, килесшĕн йышши сăмахсенче хытă тĕп хыççăн шăн çыраççĕ: лашашăн, калашшăн; çемçе тĕп хыççăн шĕн çыраççĕ: енешĕн, килесшĕн.

34. Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмах тĕпĕ хытă хупă сасăпа пĕтет пулсан, вĕсен çумне хытă аффикссем хушăнаççĕ: анализ-ăн, анализ-а, анализ-па, анализ-шăн; анализ-ла, анализ-лă,—шăн; агент-ăн,—а,—па,—шăн,—лă; интерес-а,—па,—шăн,—лă,—лан; çемçе сăмахсенче çемçе аффикссем хушăнаççĕ: индустрия — индустри-шĕн, власть, властшĕн, властлĕ.

35. Т, ть, д, дь сасăсемпе пĕтекен сăмахсем 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă чух ч с[...] ылмашаççĕ: турат—турачĕ, ск[...] склачĕ, тетрадь-тетрачĕ, плош[...] площачĕ; пару, вырăн, туху [...] жĕсенче т, д сасăсем çап[...] йулаççĕ: турадне, туратĕнч[...] ратĕнчен; складне, склад[...] складĕнчен.

36. Йĕрке хисепĕ мĕш аф[...] шут хисепĕсен тулли форми[...] не хушăннипе пулат: пĕрре[...] иккĕмĕш, тăваттăмĕш, пиллĕк[...] вуннăмĕш.

37. Л, н, р, љ, ль, њ, нь, [...] сасăсемпе пĕтекен йапала йач[...] вырăн, туху падежĕсенче т[...] тан, тен аффикссем йыш[...] вăрманта, вăрмантан, килт[...] тен, мăкăнтен; словартен.

38. Аччен, еччен, иччен аф[...] семпе пĕтекен дейепричасти[...] пĕр формăпа, иччен аффик[...] çыраççĕ: кайиччен, киличчен, ç[...] тиччен (кайаччен, çитеччен мар).

39. Урăх чĕлхерен кĕнĕ çак[...] йевĕрле глаголсене: агитировать, индустриализировать, классифицировать—хăйсен тĕпĕсем çумне (агитаци, индустриализаци, классификаци) ле аффикс хушса тăваççĕ: агитациле, индустриализациле, классификациле, кооперациле.

40. По-японски, по-английски, по-испански сăмах йевĕрле на[...]чие формисене чăвашла куçар[...] чух, ле аффикс хушса тăвас[...] японле, англиле, испанле (ял[...] испанла мар).

41. Валеçÿ хисепĕсем хытă [...] рен шар аффикс хушăнни[...] лаççĕ, çемçе тĕпрен шер аф[...] хушăннипе пулаççĕ: ултшар, в[...] шар, икшер, пилĕкшер.

42. Глаголсен хаљхи вăхă[...] пĕрреле хисепри 3-мĕш сăпат[...] килет, каламаст, килмест; ка[...] умĕнчи вăхатра çав сăпатрах [...] етчĕ, мастчĕç, местчĕç сы[...] калатчĕ, килетчĕ, каламаст[...] килместчĕç.

43. Валеçÿ дейепричастийĕ[...] ссайран аффикс мар, ссере[...] фикс çыраççĕ: каймассерен[...] массерен, килмессерен.

VII. Урăх чĕлхерен кĕнĕ паллă йачĕсене çырасси

44. Скиĭ вĕçлĕ паллă йачĕсене, вĕсем камăннине пĕлтереççĕ пулсан, скиĭ вĕçне кăларса пăрахаççĕ те, тĕп сăмахне (вăл йапала йачĕ пулат) камăнлăх падежĕн кĕскетнĕ форминче лартаççĕ; вĕсем ăнлантарса паракан йапала йачĕ 3-мĕш сăпат аффиксне йышăнат: Ленинградская область—Ленинград облаçтĕ, Сталинская эпоха—Сталин эпохи, Московский трамвай—Мускав трамвайĕ, Сталинское учение—Сталин вĕрентĕвĕ, химическая промышленность—химия промышленносте, металлургическая промышленность—металлургия промышленносте.

1-мĕш асăрхамалли: скиĭ вĕçлĕ паллă йачĕ пĕрлешÿле ăнлантарăва кăтартат пулсан, тĕп сăмах нумайлă хисепри камăнлăх падежĕнче пулат: коммунистическая партия—коммунистсен партийĕ, учительский с"езд—учителсен с"езчĕ.

2-мĕш асăрхамалли: Пайăр йатсенчен пулнă паллă йачĕсене, сăмах пуçламăшĕнче пысăк саспаллипе çыраççĕ: Сталинское учение—Сталин вĕрентĕвĕ.

45. Скиĭ вĕçлĕ паллă йачĕсем йапалан мĕнлелĕхне пĕлтереççĕ пулсан, сăмах тĕпĕ çумне ла, ле хушса пулаççĕ. Сталинская Конституция—Сталинла Конституция, большевистский колхоз—большевикла колхоз, классическая музыка—классикла музыка, химическая окраска—химиле çăрлани, коммунистический манифест—коммунистла манифест.

АСĂРХАМАЛЛИ: Социалистический, капиталистический паллă йачĕсене чăвашла куçарнă чух çак формăсемпе çыраççĕ: со[...]змла, капитализмла.

46. Скиĭ вĕçлĕ паллă й[...] хăйсем ăнлантарса паракан [...] йачĕсен вырăнне кăтартаççĕ[...] сан, хăйсен тĕпĕ çумне ри, [...] аффикссем хушаççĕ: Кав[...] Ленинградри, Америкари, Си[...]

47. Ный вĕçлĕ паллă й[...] йапалан мĕнлелĕхне пĕлт[...] пулсан, сăмах тĕпĕ çумне [...] аффикссем хушаççĕ: элемент[...] курс—элементарлă курс, Со[...] республика,—Союзлă респу[...] автономная республика—ав[...] лă республика, буржуазна[...] публика—буржуалă республ[...]

48. Ный вĕçлĕ паллă й[...] йапала камăннине пĕлт[...] пулсан, хăйсен тĕпне (вăл [...] йачĕ пулат), камăнлăх падеж[...] кетнĕ форминче лартаççĕ, [...] ăнлантарса паракан йапала[...] 3 мĕш сăпат аффиксне йы[...] партийный комитет—парти[...] митечĕ, общественный пор[...] общество йĕрки, контр[...] орган— контроль оргăне[...] нансово-бюджетная коми[...] финанспа бюджет комиççи[...]

49. Онный, енный, она[...] вĕçлĕ паллă йачĕсем йапа[...] мăннине кăтартаççĕ пулсан, [...] тĕпне (вăл йапала йачĕ [...] камăнлăх падежĕн кĕскетнĕ [...] минче лартаççĕ, вĕсем ăнла[...] паракан йапала йачĕ 3-мĕш [...] аффиксне йышăнат: револ[...] ный праздник—революция [...] никĕ, государственный пор[...] государство йĕрки, национ[...] вопрос—нация ыйтăвĕ, [...] альная политика—колония [...] тики.

VIII. Сăмах пайĕсене тепĕр йĕркене куçарасси

50. Пĕр йĕркене кĕреймен сăмах сыпăкĕсене тепĕр йĕркене куçарнă чух, çак сăмах мĕнле сыпăксене пайланнине асăрхаса куçармала. Анчах пĕр саспаллийе уйрăмăн хăварма та куçарса ма та йурамаст: пу-ра н[...] ша-сем, кай-ра-мăр, ву-ла-çç[...] ччĕ.

6

Владивостокран, 38 ç. ийунĕн 30-мĕш

МУСКАВ, КРЕМЉ

Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Калинин, Л. Каганович, Микойан, Андрейĕв, Жданăв, Йежов, Хрушчов, М. Каганович, Локтионăв йултăшсене

Сывлăх сунса саламланăшăн тав тăватпăр. Йуратнă çĕршыва усă тăвассишĕн кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр.

Љотчик КОККИНАКИ.
Штурман БРЙАНДИНСКИЙ.

★

Коккинаки тата Брйандинский йултăшсем Спасск гарнизонĕнчи бойецсемпе тата командирсемпе тĕл пулни.

Ийунĕн 30-мĕшĕнче Спасскра, Спасскри штурмăлă çĕрлехи касçенче хăйулă вилĕмпе вилнĕ граждан вăрçи геройĕсене пытарнă плошчăтре, ССР Союзĕн никам тĕкĕнме пултарайман чиккисене сыхланă чухне Йапони наљотчикĕсемпе çапăçса вилнĕ мухтавлă патриотсене—Семен Лагодăпа Василий Чаранăва пытарнă çĕрте, Коккинакипе Брйандинский йултăшсем Спасск гарнизонĕнчи бойецсемпе тата командирсемпе тĕл пулнă.

Советăн хăйулă та паттăр пилочĕсем трибунă çине хăпарсан, бойецсем вĕсене красноармейĕцла „урра“ кăшкăрса кĕтсе илнĕ.

Коккинаки йулташ бойецсемпе командирсене Хĕрлĕ столицăри ĕççыннисен йачĕпе саламланă.

—Есĕр, бойецсем, командирсемпе политработниксем,—тесе каланă Коккинаки йулташ,—тăван çĕршыв чиккисене сыхлаттăр. Анчах есĕр пĕччен мар! Кирлĕ пулсан, нумай мĕлйунлă пĕтĕм Совет халăхĕ, пĕр çын пек пулса, тăван çĕршыва сыхлама тухĕ. Тăшман тапăннине чи малтан сирĕн хăвăр çине йышăнма тивет. Çавăнпа та есĕр тăван çĕршыври халăхсем умĕнче, парти умĕнче, хамăрăн çулпуç Сталин йулташ умĕнче пысăк ответлăх туймала. Сирĕн çапăçма хатĕр тăрассине кунсерен ӳстерсе пымала,—тесе пĕтернĕ Коккинаки йулташ хăйĕн сăмахне.

Унтан „Мускав“ самољот çинчи штурман Брйандинский йулташ сăмах каланă.

—Пирĕн вĕçев,—тенĕ вăл,—совет авиацийĕн хăватне уççăн кăтартса параť. Епĕр вĕçнĕ самољота рекордсем ваљљи туман. Пирĕн авиаци савăчĕсем ун пек самољотсене йышлăн туса кăлараççĕ. Кирлĕ пулсан, çак йышши самољотсен вĕçĕмсĕр нумай ескадриљйисем Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне вĕçсе çитĕç.

Митингра пысăк çĕкленӳпе Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

Митинг пĕтнĕ хыççăн Коккинакипе Брйандинский йултăшсем Владивостока тухса кайнă.

(ТАСС).

★

Социализмлă çĕршывĕн мухтавлă соколĕсене

Совет авиацийĕн историне калăх тепĕр çĕнĕ чаплă çĕнтерӳ кĕчĕ. Пирĕн мухтава тухнă чаплă „соколсем“—чи чаплă љотчиксенчен пĕри Владимир Коккинаки тата штурман Александр Брйандинский совет производствине тунă машинăпа чăр талăк хушшинче Мускавпа Владивосток районĕ хушшине ниçта анса лармасăр чаплăн вĕçсе тухрĕç.

Вĕсем тунă халиччен пулман вĕçев тăван çĕршывăн ĕççыннисене пысăккăн савăнтараť. Вĕсем хăйула та паттăр пилотсене саламласа пиншер çырусем йараççĕ.

„Епĕр çак çĕнтерĕве тунишĕн хĕпĕртесе савăнатпăр,—тесе çырнă Кийĕври пăрахутсем йусакан „Ленинская кузница“ савăтăн пилĕк пин çынлă коллективĕ.—Сталинăн—пуринчен те çӳлерех, пуринчен те инçерех тата пуринчен те хăвăртрах вĕçмелле—текен заданине совет љотчикĕсем чаплăн пурнăçа кĕртеççĕ.

Мухтав Сире, аслă совет халăхĕн ывăлĕсем!“.

„Епĕ уйрăмах Коккинакин чаплă вĕçевĕпе хĕпĕртесе савăнатăп,—тесе çыраť Совет Союз Геройĕ И. Мазурук,—мĕншĕн тесен, Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне вĕçме питех те йăвăррине епĕ хам лайăх пĕлетĕп. 1925 çулта епĕ Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне çул çинче ана-ана ларса вĕçсе тухрăм, ун чухне сăнсăр пĕлĕтсем, тĕтресем, аçа-çиçĕмлĕ пĕлĕтсем мана йепле кĕтсе илнине епĕ халĕ те астăватăп.

Талантсемпе пуйан, геройсемпе пуйан совет çĕршывĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулмашкăн савăнăçла та хаваслă“.

„Коккинакипе Брйандинский йултăшсен чаплă вĕçевĕ çинчен хыпар илтсен, епĕ советăн социализмлă авиацийĕшĕн, тăван çĕршывăн чи лайăх çыннисемшĕн савăнтăм, мухтантăм,—тесе çыраť ССР Союзĕн халăх артисчĕ Хмельов.—Çакăн пек геройсене, пысăк ĕçсем тăвакан, тăван çĕршывшăн халиччен пулман чаплă ĕçсем тăвакан геройсене социализмăн çĕнтерне çĕршыв кăна, коммуниссен партийĕ, унăн çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе кăна вĕрентсе ӳстерме пултарнă“.

(ТАСС).

Халăх коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн çĕнтерӳне уявлаť

Совет Союзĕнчи ĕççыннисен нумай çынлă демонстрацийĕсемпе митингĕсем

Союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче, пĕртанниссен хушшинчи пĕрремĕшĕн—Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикăн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ тунă историлĕ çĕнтерĕве Мускав хавасланă, чĕререн савăнса кĕтсе илчĕ. Савăтсенче, метро шахтисенче, институтсенче, учреждениссенче çак аслă çĕнтерӳ ĕççыннисене чĕререн савăнтараť. Хăйĕн телейне каласа парас тесе аслă социализмлă демократин Конституцине тăвакан çынна—Сталин йулташа чĕререн йуратнине кăтартса парас тесе ийунĕн 29-мĕшĕнче çĕршер пин совет патриочĕсем Хĕрлĕ плошчĕте тухнă; хăйĕн праçник кунĕсенче совет халăхĕ хăйĕн телейпе çĕнтерӳсен хаваслă йуррисене йаланах çавăнта илсе пыраť. Унта, гранитлă трибунăсем çинче халăх суйласа йанă çынсем—депутатсем, Мускаври хапрăксемпе савăтсенчи пиншер стахановецсем, ăслăлăхпа искусствăн чи лайăх çыннисем.

Мавзолей трибуни çинче: Калинин, Угарăв, Булганин, Димитров, Шкирйатăв, Шверник йулташсем.

Вĕçĕмсĕр нумай лозунгсемпе плакатсем çине:

— Аслă Сталина, РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутатне çулăмлă салам!

— Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ сывă пултăр!

— Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!—тесе çырнă.

Демонстрантсен речĕсен вĕçĕ-хĕрри те курăнмасť. Столицăри Сталински районри демонстрантсен колонниче—Россия Федерацин Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташ кандидатурине пуринчен те малтан тăратнă савăтсен коллективĕсем. Пурин те чĕрисем, мĕн пур саламсем халăх суйласа йанă аслă çын патнелле туртăнаççĕ.

Демонстрантсем аслă Сталина чысласа, Молăтăв, Калинин йулташсене чысласа, мухтавлă сталинла халăх комиссарĕсене Каганович, Ворошилăв, Йежов йулташсене чысласа калакан саламсен сăмахĕсем хыттăн йанраççĕ.

Демонстрантсен плакачĕсемпе лозунгĕсем çĕршыва оборона пултарулăхне тĕреклетме чĕнеççĕ. Вĕсем тăшман ирсĕр те чĕйе иккене, пытанса пурăнма ăста иккене асутараççĕ.

Мухтавлă наркомвнуделĕцсем патне тата вĕсен çирĕп те паттăр руководителĕ Николай Иванăвич Йежов патне салам йарса, ĕççыннисем революцилĕ бољшевикла сыхăлăха ытларах та ытларах çирĕплетме пулаççĕ.

Çак калама çук чаплă демонстраци икĕ сехет ытла тăсалаť. Столицăри мĕлйун ытла ĕççыннисем Хĕрлĕ плошчĕт витĕр тухнă.

* * *

Ленинградра, Кийĕвра, Минскра Свердловскра, Харькăвра, Горькинче тата ытти хуласенче те, çавăн пекех тата Совет Союзĕн йалĕсенче те нумай çынлă митингсемпе демонстрацисем пулса иртнĕ.

Ленинградра халăхăн хăватлă та чаплă демонстрацийĕ 3 сехет ытла тăсăлнă. Унта 700 пин çын ытла пулнă.

Кийĕвра демонстрацире 300 пин çын ытла пулнă, Харькăвра 200 пин, Горькинче—120 пин, Сормăвара 20 пин çынлă митинг пулса иртнĕ.

Демонстрацисем пур çĕрте те пулса иртнĕ. Ку вăл хаваслă, телейлĕ халăхăн, хăйĕн тăван çĕршывне вĕçĕхĕррисĕр йуратакан, унăн тăшманĕсене вĕçĕ-хĕррисĕр кураймакан халăхăн, бољшевикла партийĕ йертсе пынипе çĕнĕ кĕрешĕве хатĕр, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хатĕр тăракан çĕнтерӳçĕ-халăхăн демонстрацийĕ пулнă.

(ТАСС).

Рабочисем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутатне Сталин йулташа саламлаççĕ

КАНАШ, 1-VII. (телефон тăрăх). Ийунĕн 29-мĕшĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйланă йатпа Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисен митингĕ пулчĕ.

Митинга 1500 çын ытла пухăннă. Рабочисемпе работницăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланнă пĕрремĕш депутата—халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа хаваслăн саламласа сывлăх сунчĕç.

Митингра савăтри партком çекретарĕ Майорăв, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Антонăвă, савăтри паллă стахнăвĕцсем Кукљайĕв, Кутыржин, Орлов йулташсем тухса сăмах каларĕç.

—Канаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем мана РСФСР Верховнăй Совечĕн депутатне суйласа пысăк ĕç шанса пачĕç. Епĕ хамăн суйлавçăсене тата тепĕр хут пĕтĕм чĕререн тав тăватăп,—терĕ митингра РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ савăтри пĕтĕм рабочисем йуратакан стаханăвкă Антонăвă йулташ.

ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕн—халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташăн йачĕ рабочисен ĕçри хастăрлăхне çӳле çĕклерĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Назарăв йухташ йертсе пыракан темĕрç цехĕ ийуњ уйăхĕнчи планне 140 процент тултарнă. Паллă тимĕрç стаханăвĕц Кукљайĕв йулташ кулленхи нормине 500—750 процент чухлĕ, стаханăвĕц слесăр Орлов йулташ куллен 300 процент чухлĕ тултарса пыраççĕ. Вĕсем савăтра стаханăвла йухăмăн пуçĕнче тăраççĕ.

Митинга пухăннă рабочисем ЧАССР Верховнăй Советне депутата Канаш савăт суйлав округĕ тăрăх суйланă Сталин йулташа, РСФСР Верховнăй Советне суйланă Антонăвă йулташа саламласа кĕске резољуци йышăнчĕç.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Комсомолĕцсем халăх ĕçĕнче

ШĂХАСАН. Вăрман Йенĕшри „Свобода“ колхоз çумĕнчи комсомол организаци йулашки вăхăтра лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. 1937 çулта организацинче 9 комсомолĕц анчах пулнă пулсан, халĕ 15. Халĕ комитет ĕçлет.

Комсомолĕцсем колхозра тата советра ответлă участкăсенче ĕçлесе хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Колхоз председателĕ В. Титов—комсомолĕц. Колхоз Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине тăма тивĕçлĕ пулчĕ. Тырпула çумласа пĕтерне. Вăрлăх участкине 36 гектара 2 хут сумласа тухнă. Йалхуçалăх машинисене йусаса пĕтернĕ. Çурла çавасене пуçтарса, шăлласа, туптаса хунă. Титов йулташ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра Йамаш округ суйлав комиççи членĕ пулса ĕçленĕ.

Уйхир бригадирĕ комсомолĕц Петров йул. 1937 çултанпа бригадирта ĕçлет, унăн бригади йалан мăлта пыраť.

А. Иванов колхоз счетовочĕ, çав вăхăтрах комитет çекретарĕ пулса ĕçлет, вăл колхозри учот ĕçне лайăх йеркелесе пыраť, суйлав вăхатĕнче доверенăй пулса ĕçлерĕ.

Д. Титов хастарлă комсомолĕц, йалсовет председателĕ пулса ĕçлет. Йалсовечĕ пур участкăсенче те малта пыраť. Сĕт-çу, аш-какай обйазатĕлствисене, укçа-тенкĕ йухас плана йулашки кварталшăн тултарнă.

Комсомолăн полит вĕренӳ ĕçне те лайăх йеркеленĕ. Кружока комсомолĕцсене çĕç мар, комсомолра тăман çамрăксене те 8 çын йаваçтарнă, вĕсенчен 4 хĕр.

Н. Михайлăв.

Комсомолĕцсене партине кĕме пулăшмаççĕ

ТРАК. Комсомол социализмă строитĕлствин пур участкисенче те хастарлăн хутшăнса ĕçлесе партине пулăшса пыраť. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра, суйлав округĕсенче, участкăсенчи суйлав комиççисенче нумай комсомолĕцсем ĕçлерĕç. Кунсăр пуçне тата районра 200 комсомолĕц агитатăрсем, доверĕнăйсем пулса ĕçлерĕç.

1938 çулта 14 комсомолĕца парти ретне илнĕ. ПСÇЛКС райкомĕ парти ретне кĕме 1938 çулта 23 комсомолĕца рекомендаци панă пулнă. 9 комсомолĕц ку тарана çитсе те рекомендацисем тупайманçç.

Пуçламĕш парторганизацисем, пĕччен коммуниссем комсомола бољшевикла воспитани парса, парти ретне парассипе питех те начар ĕçлеççĕ. МТС çумĕнчи комсомол комитетĕнче 50 комсомолĕц, вĕсем хушшинче стаханăвĕцсемпе ударниксем сахал мар. Кунта пуçламĕш парторганизаци (парторг Михайлăв) пĕр комсомолĕца та парти ретне илмен. Çавăн пекех Хатĕрлев халăх комиссариачĕн районри уйрăмĕнче 23 комсомолĕцран пĕр комсомолĕца çеç парти ретне илнĕ. „Бољшевик“, „Коминтерн“ колхозра комсомолĕцсенчен пĕрине те парти ретне илмен.

ПСК(б) Парти райком инструкторĕ Дмитрийĕва йулташ (Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ) комсомолĕцсемпе куллен ĕçлесе пыраť. Унăн участкинче 8 комсомолĕца парти ретне илнĕ. Михайлăв инструктăр участкинчĕ пĕр комсомолĕца та парти ретне илмен.

ПСÇЛКС райкомĕ йалти комсомол организацисене çителĕклĕ йертсе пымасť. Комсомола парти ретне парассипе те çителĕксĕр ĕçлет.

Йефимăв.

Чаплă çĕнтерӳшĕн савăнаççĕ

ЧУРАЧĂК (Çĕрпӳ р, хамăр корр.) РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççипе округри суйлав комиççийĕ суйлав итогĕ çинчен пĕлтернине Чурачăк суйлав округĕнчи суйлавçăсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ тепĕр хут чаплă çĕнтерӳ тунă йатпа ийунĕн 29-мĕшĕнче Чурачăкра митинг пулса иртрĕ. Митинга таврари йалсенчи ĕççыннисем пухăнчĕç.

Митинга Вăрманкасси йалсовет председателĕ Никифăрăв йулташ уçаť. Унтан „Социализмлă çулĕпе“ колхоз колхозникĕсенчен Çилвестрăв йулташ, Молăтăв йачĕпе тăракан колхозран колхоз председателĕ Филиппăв йулташ, ПСК(б)П Çĕрпӳ райком çекретарĕ Николайĕв йулташ, Чурачăк суйлав округ комиççи председателĕ Федăрăв йулташ, ПСÇЛКС Çĕрпӳ райкомĕнчен Иванов йулташ тухса коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен калаççĕ.

— Епĕр Сталин йулташ 1937 çулта декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Мускаври Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче каланине нихăçан та манмастпăр. Епĕр Верховнăй Советсен депутачĕсене йаланах пулăшса пырăпăр.

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыв, аслă Совет Союзĕ!

Сывă пулччăр пирĕн депутатсем Н. И. Йежовпа З. А. Андрейĕвă йулташсем!

Сывă пултăр аслă Сталин!—тесе чĕнчĕç митингра калакансем.

Йулашкинчен митинг Николай Иванăвич Йежовпа Зойа Ананйĕвнă Андрейĕвă йулташсем патне саламлă çырусем йама йышăнчĕ.

А. СУДАКОВ

Бољшевикла кадрсем ӳсеççĕ

И. В. Сталин йулташ Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сйесĕнче „ССР Союзĕн Конституци пройекчĕ çинчен“ тунă докладра каланă:

„Пирĕн совет интеллигенцийĕ вăл пĕтĕмпех çĕнĕ, хăйĕн тымарĕсемпе рабочи класпа, хресченсемпе çыхăннă интеллигенци. Пĕрремĕшĕнчен, интеллигенцин составĕ улшăнчĕ. Дворйансемпе буржуази ретĕнчен тухнисем пирĕн совет интеллигенци хушшинче нумай процент мар. Совет интеллигенцин 80—90 проценчĕ—рабочи класпа хресченсем хушшинчен тата ĕççыннисен ытти сийĕсенчен тухнă çынсем. Йулашкинчен, интеллигенци ĕçĕн характерĕ те улшăнчĕ. Ĕлĕк унăн пуйан классемшĕн ĕçлемелле пулнă, мĕншĕн тесен унăн урăхла май та пулман. Халь унăн халăхшăн ĕçлемелле, мĕншĕн тесен ĕнтĕ експлоататарла классем текех çук. Çавăнпа та ĕнтĕ вăл халь совет обшчĕствин пĕртан правалă членĕ пулса тăраť, унта вăл рабочисемпе тата хресченсемпе пĕрле, вĕсемпе пĕр туртăма кӳлĕнсе, çĕнĕ классăр социализмлă обшчĕствă тăвас ĕçре ĕçлет“.

Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн совет интеллигенцийĕ — „вăл пĕтĕмпех çĕнĕ, ĕçлĕ интеллигенци, унашкал интеллигенцине çĕр чăмăрĕ çинче пĕр çĕршывра та тупас çук“,—тесе каланă Сталин йулташ.

Совет интеллигенцийĕн кадрĕсем йăвăрлăхсемпе кĕрешнĕ çĕрте, социализмă çĕнтерессишĕн кĕрешнĕ çĕрте ӳссе çирĕпленсе пынă, ӳссе çирĕпленеççĕ те.

Партипе правитĕлствă тимлĕн пăхнипе пирĕн çĕршывра аслă шкулсен, ăслăлăх учреждениссен йышĕ буржуалă çĕршывсем нихăçан çитеймен пултарулăхпа тата хăвăртлăхпа ӳссе пыраççĕ. Пирĕн аслă шкулсенче 550 пин çын вĕренет. Англи, Франци, Итали, Германи тата Йапони çĕршывĕсенчи аслă шкулсенче вĕренекен студентсене мĕн пурне пĕрле илсен те кун чухлĕ пулаймасť.

„Буржуалă çĕршывсенчи аслă шкул,—тенĕ В. М. Молăтăв йулташ аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕнче,—ĕççыннисемшĕн тивĕççĕр кăна мар, вăл малтанхи çулсемпе танаштарсан та вумай çĕрте кайала чакса пыраť“.

Совет государстви ăслăлăха, уйрăмăн илсен, аслă шкула тимлĕн пăхаť, „кун пек пăхасси вăл чаплă буржуалă государствăсенчен пулмасť“ (Молăтăв).

Буржуалă çĕршывсенче ăслăлăх пуйаннисен аллинче тăраť, çав пуйаннисемшĕн ĕçлет.

Буржуази вăрçа промышленнăçĕпе çыхăннă, вăрçа хатĕрленме пулăшакан ăслăлăха пуринчен ытларах пулăшаť. Буржуалă строй ăслăлăха пăчлантарса лартас патне çитерчĕ. Ку йапала фашисла çĕршывсенче уйрăмах паллă пулса тăраť. Унта ăслăлăх учреждениссене хупаççĕ, ăслăлăх ĕçне пур йенчен те хĕсеççĕ, ăслăлăх çыннисем темиçе пиншерĕн кĕлмĕçе тухаççĕ.

Капиталисла çĕршывсенче аслă шкул вĕренсе пĕтернĕ çамрăк çынсем, хăйсен специаљнăçĕпе ĕç тупайман пирки, ирĕксĕрех официант, шофĕр йе тата полицейски ĕçне кĕреççĕ, йе пачах ĕççĕр йулаççĕ. Ĕççĕр йуласси—капиталисла çĕршывсенчи интеллигентсемшĕн кулленхи хăрушлăх пулса тăраť.

Фашизмă хăйĕн бандитла вăрçă политикине тӳрре кăларас шутпа, ăслăлăха фаљсификацилесе тискер кайăкла „расăлă теори“ сараť.

Пур капиталисла çĕршывсенче те аслă шкулсенче вĕренекенсен йышĕ куллен чакса пыраť.

Совет аслă шкулĕсенчи студентсене лайăх, отличнă вĕренме пур тĕрлĕ материаллă, куљтурлă майсем те туса панă. Аслă шкулсен ĕçĕ мĕнле хăватлă утăмсемпе малала пынине илсен, пирĕн социализмлă çĕршывпа тĕнчери пĕр капиталисла государствă та танаşма пултараймасť.

Пирĕн çĕршыври аслă шкулсем халĕ ĕнтĕ социализмлă хуçалăхăн тата куљтурăн пур отрăçлисене те çителĕклĕ таран кадрсем пама пултараççĕ. Пĕтĕм ĕç халĕ—аслă шкулсен ĕçне лайăхлатасси, вĕрену пахалăхне куллен çĕклесе пырасси.

Пирĕн совет аслă шкулĕ сталинла çирĕп, пысăк куљтуралă, политикăла анлă тавракурăмлă, хăйсен ĕçне лайăх пĕлсе тăвакан, халăх сăмахне итлĕсе халăхран вĕренме пĕлекен работниксем вĕрентсе кăлармала.

Социализмă строитĕлствин 20 çулĕ хушшинче Ленин—Сталин аслă партийĕ йертсе пынипе, ССР Союзĕнче ăслăлăхпа тĕпчев учреждениĕсем, аслă шкулсем йышлăн ӳссе çитĕнчĕç, вĕсенче çĕршер пин çын вĕренет, ăслăлăх ĕçне туса пыраť.

Пирĕн чăваш çĕршывĕнче, ĕлĕкхи вăхăтра аслă шкул çинчен ĕмĕтленме те пултарайман çĕрте, 3 аслă шкул ĕçлет, вĕсенче республикă ваљљи пысăк квалификацилĕ специалиссем вĕренсе тухаççĕ.

Аслă шкулпа унтан вĕренсе тухакан специалиссенчен çĕршыв çулран çул ытларах çитĕнӳ ыйтма пуçлаť. Професcăрсемпе преподавателсене халăх хуçалăхĕнче малти вырăна—пысăк квалификацилĕ специалиссем хатĕрлес ĕçе шанса панă. Вĕсем ĕçленин пахалăхĕ пирĕн çамрăк кадрсен пахалăхне тата парать.

Çав вăхăтрах Чăваш республикĕнчи аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем пурте мар-ха пысăк квалификацилĕ специалиссем пулса тăраççĕ. Студент пулнисенчен чылайĕшĕсем, халĕ вăтам шкулсенче преподаватĕл пулса ĕçлекенсем, хăйсен ăсталăхне малала хăпартассишĕн тăрăшмаççĕ, çавăнпа та вĕсен ĕçĕнче пы ăк çитменлĕхсем тĕл пулаççĕ. Кăна пуринчен ытларах истори дисциплинисене вĕрентекен преподавателсем пирки каламала. Чăваш республикĕнчи шкулсенче граждăнла историне вĕрентес ĕçе çителĕксĕр йеркеленĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти оргăнĕсем йенчен истори вĕрентекенсен ĕçне куллен тĕрĕслесе, вĕсене пулăшса пырасси çук.

„Пирĕн умра крепăç тăраť. Вăл крепăçа, унăн нумай йенлĕ пĕлтерĕшĕсемпе пĕрле, ăслăлăх тĕççĕ. Çав крепăçа пирĕн мĕнле пулсан та çĕнтерсе илмеле. Çав крепăçа çамрăксен илмеле...“ Сталин йулташ çак историлĕ сăмахсене вунă çул кайарах—1928 çулхи майан 16-мĕшĕнче ПСÇЛКС VIII-мĕш сйесĕнче каланă.

Çак задачăна пурнăçлама аслă шкулсенчи парторганизацисен студентсене тата лайăхрах мобилизацилемелле, пур студентсене те отличнă, лайăх вĕренекен тумала.

Пирĕн совет студенчĕсен тĕп йышĕ рабочи класпа тата хресченсемпе таччăн çыхăнса тăраť. Студентсем ĕçхалăхĕпе çакăн пек пĕр тăванăн çыхăнни тĕнчери пĕр çĕршывра та урăх çук. Пирĕн студент—социализмлă çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, халăх хушшинчи ĕçе активлăн туса пыракан коммунизмă ĕçĕшĕн чĕререн парăнса кĕрешекен çын.

Чăваш пединститучĕн руководствине сăрханса кĕнĕ троцкиссем, бухаринцăсем, буржуалă националиссем пысăк квалификацилĕ кадрсем хатĕрлес ĕçе нумай çул хушши аркатса пынă. Тăшмансем çине тăнипе педагогикă институтĕнче истори факуљтетне пĕтерсе лартнă.

Куљтурăн ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче ларнă халăх тăшманĕсем — буржуалă националиссем, троцкиссем, шпионсем институтăн ĕçне пĕтерсе лартасси патне çитернĕ. 1934 çултанпа институт 22 ĕç тунă, вĕсенчен нумайĕшĕсем, совета хирĕçле, буржуалă националисла сĕрĕмпе тулнă ĕçсем.

Тăшмансен ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнчи тата ытти шкулсенчи йăвисене çапса аркатнă. Халĕ пирĕн умра тăшмансен сăтарла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерсе, аслă шкулсемпе ăслăлăх учреждениссен ĕçне, партипе правитĕлствă ыйтнă пек, тĕпрен çĕнетсе лайăхлатас задачă тăраť.

Парти организацисем студентсемпе преподавателсем хушшинче бољшевикла тимлĕхе, тăшмансене кураймалăха тата ытларах çĕклесе çитĕн куллен çине тăрса ĕçлемелле.

Пирĕн çĕршывра халăх хушшинчен тухнă учонăйсен çĕнĕ кадрĕсем вăйлăран вăйлă ӳссе пыраççĕ. ССР Союзĕнче ăслăлăх халăхшăн ĕçлет. Сталин йулташ ăслăлăх работникĕсене Кремĕлре йышăннă чух каланă сăмахра совет учонăйĕсене ăслăлăх „жерцĕсен“ хуппине кĕрсе ларассинчен тата халăхран уйрăлса кайассинчен сыхланма, халăхшăн паранса ĕçлеме чĕнчĕ.

Халь вăхăтра Чăваш республикĕнчи аслă шкулсенче 761 студент вĕренет, вĕсенчен педагогикă институчĕпе учителсен институтĕнче 689 çын, йалхуçалăх институтĕнче 192 çын вĕренет.

Кунсăр пуçне, педагогикă институчĕпе учителсен институтĕнче заочнă йеркепе 1500 çын вĕренет.

Чăваш халăхне кăçалхи çул çак аслă шкулсем халăха çутта кăларас ĕç ваљљи 238 специалис, йалхуçалăхĕ ваљљи 48 специалис параççĕ.

Кăçалхи çул Чăваш республикĕнчи аслă шкулсем студентсен ретне çĕнĕрен 700 çын илеççĕ. Аслă шкулсене кĕме хатĕрленнĕ çамрăксем пирĕн республикăра çителĕклĕ, кăçалхи çул вăтам шкулсенчен 1052 çын вĕренсе тухнă. Анчах кунта аслă шкулсене илес ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса лармалла йурамасť. Вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн сармала, вĕсене специаљнăç суйласа илме пулăшмала.

Пирĕн социализмлă çĕршыва малта пыракан ăслăлăх çеç, „ăслăлăхăн вăтă работникĕсемпе ăслăлăхăн çамрăк работникĕсен союзĕн пахалăхне, хакне, вăйхăватне ăнланакан, ăслăлăхăн пур алăкĕсене

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Чехословаки çарĕн маневĕрĕсем

ЎКЕРЧĔК СИНЧЕ: Салтаксем бетонласа тунă траншей тăрăх пырасçĕ.

(Сойузфото „Прессклише")

КИТАЙРИ ФРОНТСЕНЧЕ

(Ийунĕн 23-мĕшпе 30-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Йапони командованийĕ Йанцзы йуханшывĕн районĕ çине халичченхи пекех пысăк тимлĕхпе пăхать. Чженчжоу патĕнче (Бейпин-Ханьхоу чукунçулĕпе Лунхай чукунçулĕ пĕрлешнĕ çĕрти питех те кирлĕ стратегиллĕ пункт) çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, йапонĕцсем вăрçă ĕçĕсен тĕп центрне Анцин районне (Аньхуей провинци) куçарнă. Йапонĕцсем хальхи вăхăтра уйрăмах Матан, Дуньçу (Аньцинрен кăнтăр-хĕвеланăçнеле) тата Дицзйан çине (Аньцинрен çурçĕр-хĕвелтухăçнеле) хыттăн тапăнса пыраççĕ. Йапони командованийĕ çав районсене ытти фронтсенчен çар чаçĕсем илсе килсе тултарать. Аньцин районĕнче Йапони çарĕсем 60 пин салтак шутланаççĕ. Кунсăр пуçне Йапони командованийĕ Йанцзы йуханшывĕ патне çĕр таран çар карапĕсем илсе пынă.

Йанцзы шывĕ патĕнчи стратегиллĕ пункт, Аньцинрен кăнтăр-хĕвеланăçнеле ларакан Матан сывăхĕнче калама çук хăйар çапăçусем пыраççĕ. Йапони çарĕсем (6 пин салтак) çак пункт çине вăйла наступлени туса пыраççĕ. Китай çарĕсем Матана пырса кĕнĕ çĕрте йапонĕцсене хирĕç пысăк паттăрлăхпа тăраççĕ. Йапонĕцсем çар карапĕсем çинчен татти-сыпписĕр хыттăн персе тăнине тата сывлăшран бомбăсем пăрахнине пăхмасăрах китайĕцсем хăйсен позицийĕсене тытса тăраççĕ çеç мар, вĕсем тата йапонĕцсене калама çук пысăк çухатусем кӳреççĕ. Йапонин Матан çине наступлени туса пыракан 6.000 çынлă колонни виçĕ кун хушшинче çуррине йахăн пĕтнĕ.

Дицзйан патĕнче те (Аньцинрен çурçĕр-хĕвелтухăçнеле) пысăк çапăçусем пыраççĕ. Ийунĕн 22-мĕшĕнче Йапони çарĕсем, пысăк подкрепленисем илсе, Дицзйан çине наступлени тума пуçланă. Анчах йапонĕцсен наступленийĕ ăнăçлă пулман. Йулашки кунсенче Дицзйан патĕнчи çапăçусем питех те хăйаррăн пулса пыраççĕ. Кунти çапăçусенче йапонĕцсен 1000 салтак ытла вилнĕ.

Çурçĕр Китайра Китай çарĕсем Чжунмоу (Кайфынпа Хенань провинцинчен хĕвеланăçнеле) тата Йуйши йатлă (Чжунмоуран кăнтăрала) хуласене тытса илнĕ. Чжунмоупа Йуйширен хĕвеланăçнеле кайала чакнă чухне йапонĕцсен пысăк çухатусем пулнă.

Вăтам Китайра Йанцзы шывĕ патĕнче çапăçусене пысăккăн туса ынипе пĕрлех, Йапони командованийĕ Шаньси провинцин (Çурçĕр Китай) кăнтăр пайĕнче те пысăк çапăçусем пуçласа йама хатĕрленет.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Левант фронтĕнче республиканĕцсем малалах наступлени туса пыраççĕ. Пуебла де Вальверде районĕнче республиканĕцсем чылай высотасем (çӳлĕ вырăнсем) йышăннă, тыткăна илнĕ тата хĕçпăшалсем туртса илнĕ.

Республиканĕцсен çак кунсенчи наступленийĕ тăшманăн планĕсене çĕмĕрнĕ, тăшман Мора де Рубиелос районĕнче республиканĕцсен фронтне татса кĕме вăй пухнă пулнă. Тепĕр йенчен, республиканĕцсен çак çитĕнĕвĕ пăлхавçăсем республиканĕцсен Вильйаермос патĕнчи позицийĕсем çине хĕсесине йăвашлатнă.

Ревенга районĕнче (вăтаçĕрти фронт) республикă çарĕсем Инохоса дел Дукерен хĕвелавăç йенче пăлхавçăсен позицийĕсене туртса илнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук. (ТАСС).

Германи самолючĕн ăнман вĕçевĕ

Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, Германи самолючĕ Берлин—Каир (Йегипет)—Берлин маршрутпа вĕçме хăтланса пăхнă, ку ĕç ăнăçсăр пулни Германири авиаци ĕçĕнчи фашиссене питĕ те кӳрентернĕ.

Ийунĕн 27-мĕшĕнче Берлинри аэродром çинче Германин тăвată моторлă самолючĕ вĕçсе çĕкленнĕ, вăл самолютăн Берлин—Каир—Берлин маршрутпа пĕр лармасăр вĕçсе 24 сехет хушшинче 6.300 километр тумала пулнă.

Каиртан кайала вĕçсе таврăннă чух самолютăн Салоникинче (Греци) ирĕксĕр анса лармала пулнă.

Фашиссен хаçачĕсем, вĕçев пирки малтанах праçник тума пуçланăскерсем, вĕçев ăнманни çинчен нимĕн те шарламаççĕ. (ТАСС).

Большевикла кадрсем ӳсеççĕ

(Й У Л А Ш К И)

те хамăр çĕршывăн çамрăк вăйĕсене вальли ирĕккĕн те хавассăн усă куракан тата вĕсене ăслăлăхăн çӳллĕшĕсене кĕрешсе илме май паракан, малашлăх ăслăлăхри çамрăксенĕн пулассине йышăнакан ăслăлăх" çеç кирлĕ.

Пирĕн аслă шкулсем умĕнче тĕлĕнмеле аслă та çутă малашлăх выртать, кун пек малашлăх урăх нимĕнле çĕршывра та çук.

Социалисăм ĕçне чĕрĕрен парăнса, ăслăлăхри йĕркесĕрлĕхĕн, сăхăлăхăн, консерватисăмăн йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешесси, ăслăлăхра çĕнĕ, хăйулă та харсăр утăмсем тăвасси—çакнашкал задачăсем тăраççĕ совет ăслăлăхĕпе аслă шкулсенче ĕçлекенсем умĕнче.

Ку задачăсене пурнăçлас ĕçре аслă шкулсенчи парти организацийĕсем тĕп вырăн йышăнса тăмала, парторганизацийĕсен кăна тума вăйсем çителĕклĕ.

Пирĕн аслă шкулсенче хамăрăн чăваш хушшинчен ӳссе çитĕннĕ преподавателĕсен кадрĕсем пур.

Совет интеллигенцин кадрĕсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре ССР Сойузĕнчи халăхсем социалисăмшăн çĕнтерӳлĕн кĕрешсе илнĕ вĕренӳ прави пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вĕренӳ правине Сталинла Конституцин 121-мĕш статйинче çырса хунă.

„ССР Сойузĕн гражданĕсен вĕренӳ прави пур.

Ку права—пуçламĕш шкулсенче пурне те обйазательнă йĕркепе вĕрентнипе, пур шкулсенче те, вăл шутра аслă шкулсенче вĕрентнипе, аслă шкулсенче вĕренекенсене пурне те пекех патшалăх стипендийĕсем парса тăнипе, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентнипе, савăтсенче, совхозсенче, машинă-трактăр станцисенче тата колхозсенче ĕçхалăхне производствă, техникă, агрономи ĕçне тӳлеттермесĕр вĕрентнипе пурнăçа кĕрсе пырать".

Парти тата Сталинпа Молатăв йулташсем аслă шкул работникĕсем умне лартнă пысăк задачăсенчен пĕри—вăл студентсемпе преподавателсене идейлă-политикăлă воспитани парасси, Совет специалисĕ политикă йенчен анлă тавракурăмлă, ăслăлăхри кивĕ, типсе хăрнă традицисенчен ирĕклĕ çын, революцилĕ ăслăлăхшăн хăйулăн та татăклăн кĕрешекен çын пулмала.

Парти тата совет влаçĕ тăрăшнипе, коммунисcенчен тата комсомолĕцсенчен ăслăлăх работникĕсем, преподавателсем сахал мар пăхса çитĕнтернĕ. Чăваш пединститутĕнчи ăслăлăх работникĕсемпе преподавателсем хушшинче коммунисcем 12 çын, йалхуçалăх институтĕнче 3 çын, студентсемпе пĕрле илсен, çак аслă шкулсенчи парторганизацисем 50 çынран та иртеççĕ.

Çапла ĕнтĕ ăслăлăх работникĕсемпе преподавателсем хушшинче политикăла ĕçе лайăх йĕркелеме, орденлă Чăваш республикĕнче социалисăм строительствин тĕрлĕрен участкисем вальли специалисcем хатĕрлес ĕçе тата вăйлăнрах мала йама пирĕн аслă шкулсенчи парторганизацисен квалификацилĕ кадрсем çителĕклĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес умĕн

Машинсене халех йусаса çитерес пулать

ЕЛĔК. Тырпулсем пулса пыраççĕ. Анчах районри колхозсенче тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕç йулса пырать. Уйрăмах йалхуçалăх машинисене йусас тĕлĕшпе васкани çук. Колхозсенче пурĕ 222 жнейкă, вĕсенчен—150 çеç йусанă. 126 молотилкăран пĕрне те тĕплĕн йусаман. Йанăшри колхозăн икĕ жнейкă, вĕсене ку вăхăтченех йусама тытăнман. Мăн Шĕвĕшри „Правда" колхозăн жнейкисем те йусавсăр, çĕмрĕк ларaççĕ.

Çак кунсенчех утă çулас ĕç пуçланать. Çавах колхозсенче ку ĕçе кирлĕ пек хатĕрленсе пыни çукха. Чылай колхозсенче креплесем, çавасем çитмеççĕ. Кунпа пĕрлех утă çулмали машинсене те йусаса çитермен. Вĕсем колхозсенче 41, ку шутран 30 машинăна çеç йусанă.

Витнĕ итемсене йусаман, çĕнĕрен тума палăртнă итемсене тума пуçăнман. Районĕпе 164 витнĕ итем. Пайăнхи куна вĕсенчен нихăшĕ те ĕçе хатĕр мар. Вĕсен тăррине витес пулать, иртнĕ çулхи кивĕ уламсенчен тасатас пулать. Çĕнĕ тырра хумали ампарсене те дезинфекцилемен.

Çĕрĕç пайĕнчи работниксем тата колхоз председателĕсем тырпулсене çумкуракĕсенчен тасатытни—тырпул тухăçлăхне ӳстернине ăнланса илмен пулас. Кĕрхи тата çуртри калчисене çумкуракĕсенчен тасатмаççĕ. Вăйлă тырпула сăмахпа туса илме çук, ăна кĕрешсе туса илмеле. Мăн Вылă йалсоветне кĕрекен колхозсем вăйла тырпул туса илесси çинчен нумай калаççĕ, обйазательствăсем те илеççĕ. Анчах вĕсен уйхирĕсенче çумкурăксем вăйлăн çитĕнеççĕ.

Елĕк райçĕрĕç пайĕн колхозсене тĕплĕн йĕртсе пымала, пулăшмала. Çĕнĕ тырпулсене пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленмеле.

В. Йефремăв.

Тырпулсене тăкаксăр пухса кĕрессишĕн

ТРАК. Районри колхозсем уйри тырпулсене пухса кĕме хĕрсех хатĕрленеççĕ. Анаткассинчи Молатăв йачĕпе тăракан колхозпа Мартынкассинчи „Красный восток" колхозсем тырпулсене вăхăтра пĕр тăкаксăр пухса кĕрес тесе пĕрпĕринпе социалисăмлă ăмăртăва тухнă. Халĕ Анаткассинчи Молатăв йачĕпе тăракан колхоз çуртыррисем çинчен икĕ хут çумкурăксене çумласа тухрĕ. Тырпулсене пухса кĕмели машинсене йусаса хатĕрленĕ. Çĕнĕрен витнĕ итем тунă. Колхоз çак кунсенчех утă çулма тухать. Утă çулма тухма çавасене туптаса хунă.

Çакăн пекех Тăхăртакари „Красная звезда" колхозра та тырпулсене пухса кĕме хĕрсех хатĕрленеççĕ. Колхозниксем çуртыррисем çинчен çумкурăкĕсене çумласа тухнă. Колхозра çум çумлас ĕçре çĕнĕрен стахановкăсем хутшăнчĕç.

Акă, 60 çулхи колхозницă Марийа Фомина, 56 çулхи Й. Гераçимăвă, 65 çулхи Т. Гераçимăвă тата Йакăвлĕвăпа А. Матвейĕвă колхозницăсем ĕç нормине 200—220 процент тултарса пычĕç.

Колхозра тырпулсене пухса кĕме хатĕрленнĕ май жнейкăна тата молотилкăна йусарĕç. Колхоз кăçал утăна ирттерех çулса кĕрет, утă çулма тухма çавасем хатĕр.

Çĕнĕ тырра йышăнма халĕ ампарсене çуса тасатаççĕ, михĕсем, кĕлте кӳме урапасем йусаса хатĕрлеççĕ. Колхозри пур бригадăсем те пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

В. Васильйĕв.

„Хĕрлĕ флот" колхозра

Паваркасси (Çĕрпӳ р.) йалсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ флот" колхоз çуракине вĕçленĕ хыççăнах тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленме тытăнчĕ. Чи малтанах жнейкăсене, молотилкăсене тата ытти машинсене йусаса лартнă. Çак иртнĕ кунсенче çейалкăсене, сӳресене йусарĕç. „Хĕрлĕ флот" колхоз тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хатĕрленнипе пĕрлех кĕрхи тырăсене акма та хатĕрленет.

Уйран тырпулсене пуçтарса кĕнĕ чухне кирлĕ пулакан машинсене йусаса пĕтернĕ. Кĕлте турттармали урапасем, çавăн пекех ытти хатĕрсем те йусавлă та çителĕклĕ.

Бригадăсем хушшинче социалисăмла ăмăрту сарăлса пырать. Кашни бригадă тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленме тăрăшать.

Тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ вăхăтра йаслĕ пулать. Ун вальли апат-çимĕçсем хатĕрлесе хунă.

И. Давыдăв.

Вăрман Кипекри (Шăхасан р.) Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхоз тырпулсене уйран пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленсе пырать. Йалхуçалăх машинисене йусаса лартнă. Вĕсемпе ĕçлеме колхозниксене те çирĕплетнĕ.

Çĕнĕ тырпулсене хума 10 ампар тасатса дезинфекциленĕ. Тырă турттарма михĕсем, шăналăксем кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ.

Т. Никишов. М. Тимофейĕв.

Сăтăрлăх йулашкисене пĕтермеле

Шупашкар хулинче пĕрле апатланас ĕç кирлĕ вырăнта тăманни пирки жалăбăсем пит нумай. Кĕске хушăрах 1-мĕш номĕрлĕ столовăй çинчен 50 жалăбă ытла пулнă. Апла пулин те Чăвашторгăн Шупашкар хулинчи уйрăмĕнчи тата Суту-илӳ Халăх Комиссариатĕнчи работниксем çынсем çине чунсăрла пăхма пăрахман-ха. Шупашкарти торгăн директăрĕ ĕççыннисен жалăбисене хăй пăхса тухмасть, жалăбăсене производствăлă канашлусенче сӳтсе йавмаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме нимĕн те тумаççĕ.

Столовăйсене кирлĕ продуктăсем тăратас ĕç йапăх. Пĕрле апатланас ĕçĕн секцийĕ сумĕнче ку вăхăта çитсе те столовăйсемпе буфетсене вальли продуктăсем тăратмали база организацилемен. ЧАССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тата Чăвашторг столовăйсене кирлĕ продуктăсем тăратас ыйтупа интересленмеççĕ.

Çимĕççен пахалăхĕ начар тата кухньăсенче тасалăх çук. Хресчен çуртĕ çумĕнчи столовăйра санитари тĕлĕшĕнчен йапăх условире çимĕççем пĕçереççĕ. Кухньăра питĕ тăвăр. Чашăк-тирĕксене çăвакан пӳлĕмре те тăвăр, урайĕсем таса мар. Çак çитменлĕхсем Шупашкар хулинчи санитари инспекци, Шупашкарти санитари тухтăрĕ тата пĕрле апатланас ĕçри работниксен профсойузĕн облаçри комитечĕн куçĕ умĕнчех пулса пыраççĕ.

Пĕр столовăйĕнче те чей кашăкĕсем, каструльсем, çатмасем çителĕклĕ мар. Хурансемпе каструльсем çине витмелисем çук. Кухньă кантăкĕсене шăнасем вĕççе кĕрессинчен сеткăсем карса пӳлмен. Гостиницăри столовăй кухнинче таракансем пур, çакна пула çимĕç çинчен таракансем тухнисем те пулкаланă.

Кухньăра ĕçлекенсене, официанткăсене тата буфетчицăсене ĕçлени тăрăх тӳлес йĕрке туман. Кам мĕнле ĕçленине кура тӳлеменнипе квалификацилĕ работниксем ĕçрен тухса кайаççĕ. Пĕр столовăйĕнче те ăмăртса ĕçлени çук.

Хулари пасара пиншер колхозниксем хăйсен йалхуçалăх продукцисене сутма килеççĕ. Анчах та вĕсене вери апат çитерессин, кулачпа чей ĕçтерессин çинчен никам та шутламасть. Пур столовăйсем пасар вырăнĕнчен айакра, анчах вĕсенче хашпĕр чухне чей пулмасть те.

Коопинсойуз пасар патĕнче 2 хутлă чей ĕçмелипе ресторан çурчĕ тунăччĕ. Халĕ çак çурта Чăвашторгпа Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ йышăннă. Вĕсем чайнăй тытса тăма усси çук, тесе шутлаççĕ пулас.

Шупашкар хулинче йулашки çулсенче 12 столовăй хупнă (вĕсене халăх тăшманĕсем хуптарнă). Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕç йулашкийĕсене пĕтерес, майпа çак столовăйсенчен пĕрне те уçман. Хулара кама та пулин пĕр-пĕр çурт кирлĕ пулсан, столовăйсене йышăнса илнĕ. Çапла вара ресторана, аптекă çумĕнчипе халăх сучĕ вырнăçнă çуртсенчи столовăйсене, Розă Люксембург урамĕнчи икĕ хутлă çуртри столовăйне тата ыттисĕне те хупса пĕтернĕ.

Хула совечĕн пĕрле апатланас ĕçе лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлеме вăхăт ĕнтĕ, столовăйсемпе ресторансене вальли çуртйĕрсем çителĕклĕ тупса памала, Шупашкар хулинче пысăк савăтсем тума тытăннипе, чукунçулне çӳремелле тума хатĕрленнипе рабочисемпе служăщчисем, вĕренекенсен йышĕ те нумайланса пырать. Çаксем ĕнтĕ пĕрле апатланас ĕçе тĕпренех лайăхлатма хушаççĕ.

С. С.

Футбол

„Буревестник"—„Динамо"

Ийунĕн 30-мĕшĕнче „Темп" обществин стадионĕнче Шупашкарти „Буревестник" тата „Динамо" футбол командисем йулташла тĕл пулса вылярĕç. Вăйă пуçлансан малтанхи минутрах буревестниксем динамăвĕцсен алăкне пĕрремĕш мечкă тапса кĕртрĕç. „Динамо" футболисĕсем вăййа хăйсен аллине илме хăтланчĕç, анчах вĕсен нимĕнле пасовкă та çук пирки, нимĕн те тухмарĕ. Вăйăн малтанхи таймĕнче „Буревестник" футболисĕсем „противникĕн" алăкне тата 4 хутчен тапса кĕртрĕç. Динамăвĕцсем пĕр мечкă та тапса кĕртеймерĕç. Пĕрремĕш таймра „Буревестник" команди „Динамо" алăкне кĕртнĕ 5 мечкăран, тăватăшне Блинов йулташ тапса кĕртрĕ.

Перерыв хыççăн динамăвĕцсем вăйă шутне танаштарма тăрăшса пăхрĕç. Анчах кунтан нимĕн те тухмарĕ. Иккĕмĕш таймра вĕсем аран-аран пĕр мечкă тапса кĕртрĕç. Çав вăхăтрах „Буревестник" футболисĕсем 3 мечкă тапса кĕртрĕç, вăйă шучĕ 8 : 1 пулса тăчĕ.

Судйа динамăвĕцсен йенче пулчĕ. Буревестниксем тапса кĕртнĕ пĕр мечкăна шутламарĕ, динамăвĕцсем штраф площадки çинче мечкăна алăпа тытрĕç, çакăншăн 11 метăртан тапмăла штраф памарĕ.

Вăйăри çак пысăк кăлтăксене пăхмасăрах, „Буревестник" обществин çамрăк футболисĕсем (вĕсем кăçалхипе иккĕмĕш çул çеç вылаççĕ) пысăк çĕнтерӳ турĕç.

Р. Шашков.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Çулахи каникул вăхăтĕнче—Атăл тăрăх çӳрекен пăрахут çинчи канмали çуртра

КАНĂР!

Пуçламĕш тата вăтам шкул работникĕсен Сойузĕн Чăваш республикĕнчи комитечĕ хăйĕн членĕсене вальли ийуль тата август уйăхĕсенче Атăл тăрăх çӳрекен пăрахут çинчи канмали çуртра канма тӳлевлĕ путиовкăсем сутăн илнĕ. Путиовкăсем илме Сойузăн Чăваш республикĕнчи комитетне пымала.

Пуçламĕш тата вăтам шкул работникĕсен Сойузĕн Чăваш республикĕнчи комитечĕ.

Чăвашполиграфтрестăн Шупашкарти 1-мĕш № типографине

Аслă бухгалтĕр, аслă бухгалтĕр заместителĕ

К И Р Л Ĕ

Условисем килĕшӳ тăрăх.

Заньати вăхăтĕнче çак адрĕспе пымала: Дом Печати, нижний этаж, к директору.

Заготзерно Чăваш республикĕнчи канторне

кантурта

тата районсенче ĕçлеме

Инженер-строителсем, техник-строител, аслă бухгалтерсем (руководителсем), аслă економист, счетовод, кассир-инкассатăр

К И Р Л Ĕ

Адрĕс: г. Чебоксары, ул. Калинина, 83, Республиканская контора, В-О Центрозаготзерно.

ВĂРНАРТИ ЗООВЕТТЕХНИКУМ

1938—1939 ÇУЛСЕНЧЕ

вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

ТЕХНИКУМĂН ИКĔ УЙРĂМ

Зоотехникă уйрăмĕ — майракалă шултра выльăхсем тăрăх ĕçлекен специальнăçпе кĕçĕн зоотехниксем вĕрентсе хатĕрлет. Вĕренмели срук 4 çул. 30 çын йышăнаççĕ.

Ветеринари уйрăмĕ — ветеринари врачсен помощникĕсене вĕрентсе хатĕрлет. Вĕренмели срук 4 çул. 60 çын йышăнаççĕ.

Пĕрремĕш курса 15 çулхисенчен 30 çулхисем таран çичĕ çуллă шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Зайавленисене 1938 çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 18-мĕшĕнчен йышăнаççĕ.

Зайавленисемпе пĕрле çак документсем кирлĕ: 1) Туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен свидетелствă (подлинник), 2) Государствăн емеллекен учрежденисенчен илнĕ справкă, ун çинче вĕренме кĕрекенĕн сывлăхĕ ку техникума вĕренме кĕме йуракланине кăтартни пулма кирлĕ, 3) Хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă, 4) Икĕ фото-карточкă (зайавлени параканĕн хăйĕн алпусса пĕр-пĕр учрежденире çирĕплеттермеле), 5) Çар служби тивĕçлĕхне кăтартакан документ (военнообйазаннăйсен).

Испытанисем 1938 çулхи августăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕнчен пулаççĕ. Çак предметсемпе: вырăс чĕлхи, литературă, математикă, физикă, физикăлă географи тата обществоведени.

Испытанине чĕннĕ тăрăх çеç пымала, пĕрле паспăрт кирлĕ.

Студентсене вĕреннине кура стипенди параççĕ, обшежити, столовăй, мунча, кĕпе-йĕм çумали пур, выртса тăма матрас, одейал параççĕ.

Зайавленисене тата ыйтусене çак адрĕспе йамала: ст. Вурнары, ЧАССР, Зооветтехникум,

Диренция.

3—2

УХУТАНА ÇӲРЕКЕНСЕМ!

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Шупашкарти ухута хуçалăхне 5 çул хушши усă курма ухута вырăнĕсене çирĕплетсе панă: Атăлăн сулахай йенче—„Пыльар" кӳлĕрен „Булдыхан" кӳлĕ таран, унти вăрмансене те, Атăлăн сылтăм йенче—„Сӳктеркă утравĕ".

Ухута хуçалăхĕ заказниксем уйăрнă: „Хура Йамаксар" тата „Приходное" кӳлĕсем, унта ухута тума йурамасть.

Çирĕплетсе панă ухута хуçалăхĕнче ухутаспортсекци членĕсене — ухута хуçалăхĕ панă картăчкă тăрăх ухута тума ирĕк параççĕ.

Йĕркене пăсса ухута тăвакансене хытă айăплаççĕ.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, çак çулхи ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çентаберĕн 1-мĕшĕчен

ухутниксене çĕнĕрен регистраци пулать

Шупашкар хулинчи тата сывăхри йалсенчи спортсмен-ухутниксен регистрацине ухута хуçалăхне пымала: Шупашкар хули, К. Либкнехт урамĕ, 14.

Регистрацине пынисен паспăрт, вăл çуккисен колхоз йе йалсовет панă справкă пулмала, ухутаспортсекци членĕсен фото-картăчкăсем кирлĕ: 2,5x3.

Кăтартнă срукра регистрацине пыман ухутниксен 1938 çулта ухутана çӳреме ирĕк пулмасть.

Ухута хуçалăхĕ.

КОЛХОЗСЕМПЕ ЙЕДИНОЛИЧНИКСЕН ХУÇАЛĂХĔСЕНЕ

Государствăна утă тăратмали договăр çинчи 11-мĕш пункт тăрăх, ОСТ-ăн 5749-мĕшĕ кăтартнипе, „ЧУВАШЗАГОТСЕНО" пунктисем 1938 çулта çулса илнĕ утăран кондицилисенĕ çеç илеççĕ. Утă кондицийĕ çакăн пек пулмала:

I-мĕш ушкăнри—акнă курăксен утти, чечеке ларнă чух йе чечеке ларас умĕн çулни, выртарса çĕртменни, йешĕл тĕсе тата шăрăшне çухатманни;

II-мĕш ушкăнри—çуркуннĕ шыв илекен вырăнсенче ӳснĕ курăк утти, чечеке ларнă вăхăтра çулни, хăмăр тĕслĕ пулманни, йешĕл тĕсе тата шăрăша çухатманни. Хутăш урăх курăксем пулсан илмеççĕ.

III-мĕш ушкăнри—типĕ çаран утти, чечеке ларнă вăхăтра йе чечеке ларас умĕн пуçтарса кĕртни, хăмăр тĕслĕ пулманни, йешĕл тĕслисене; хутăш урăх тĕрлĕ курăксем пулсан илмеççĕ.

IV-мĕш ушкăнри—шыв илекен айлăм вырăнсенчи утă, чечеке ларнă вăхăтра çулнăскер тата йешĕл тĕслĕ пулмала.

Хăйаха, шурлăхри вакша курăкĕ, утхӳри, арăм утти тата выльăхсем çимен ытти тĕрлĕ курăксем хутăш пулсан—илмеççĕ.

Санитарипе ветеринари йенчен хăрушлăх çукки çинчен ветнадзор справкă памасăр леçнине йышăнмаççĕ.

Утă Хатĕрлевĕн Чăваш Кантурĕ.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 327

13

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 581.